52—75

ЧĂВАШ ХАЛĂХĔН МУХТАВЛĂ ЫВĂЛĔ

ЧĂВАШГОСИЗДАТ — 1952

К. Ивановъ

ЧĂВАШ ХАЛĂХĔН МУХТАВЛĂ ЫВĂЛĔ

К. В. ИВАНОВА АСА ИЛНИСЕМ

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
Чебоксары Чувашской АССР

ЧĂВАШГОСИЗДАТ ⊙ 1952

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР
ДОСТАВЛЕН
Чувашской Книжной Палатой
5 июня 1952 г.
№ 120

ЧĂВАШ ХАЛĂХĔН МУХТАВЛĂ ЫВĂЛĔ

(*Умсăмах вырăнне*)

Константин Васильевич Иванов 1890 çулти майăн 15(27)-мĕш кунĕнче Ĕпхӳ кĕпĕрнинче (халĕ Пушкăрт АССР-ĕ), Белебей уездĕнче, Слакпуç ятлă ялта çуралнă.

Сакăр çула çитсен, вăл пуçламăш шкула вĕренме кĕрет, унта виçĕ çул вĕреннĕ хыççăн, 1902 çулта Белебей хулинчи шкула каять. Анчах ку шкулта Иванов нумаях вĕренеймест. Белебейри шкулта патша правительстви чĕртсе пыракан нацилле хирĕçӳ питех те вăйлă пулнă. Çамрăк Константин, çав тискер йĕркене тӳсеймесĕр, шкула пăрахать те тăван ялне таврăнать.

Пулас поэт ир те, каç та вĕренесси çинчен шухăшланă. Вĕренмесен çын пулаймăн, тĕттĕмре çухалса кайăн, халăхшăн нимĕнле усă та тăваймăн,—çакăн пек пулнă Ивановăн çамрăк чĕрине ыраттаракан шухăшсем.

Вăл вăхăтра пирĕн халăх хушшинче Чĕмпĕр чăваш шкулĕ пысăк хисепре тăнă. Константин Иванов 1903 çулхи кĕркунне çав шкула пырса кĕрет. Малашне вара унăн кун-çулĕ, пĕтĕмĕшпе илсен, кĕпĕрне хулинче—Чĕмпĕрте иртет.

Поэт пулма ĕмĕтленекен çамрăк Константин Иванов вырăс литературин классикĕсен: Пушкин, Лермонтов, Некрасов, Тургенев, Толстой, Горький тата ытти сен произведенийĕсене юратса вулать. Хушăран унăн аллине Чернышевский, Герцен, Огарёв тата ытти писательсем çырнă кĕнекесем те лекеççĕ. Сăмахран, çакă паллă: вăл Н. Г. Чернышевскин „Что делать?“ ятлă романне тупса вуланă. Çав вăхăтрах Иванов чăваш чĕлхипе çырнă малтанхи произведенисемпе те паллашать; вĕсенчен пĕри М. Ф. Федоровăн „Арçури“ халапĕ, теприГ. Т. Тимофеевăн „Тăхăр ялĕ“ пулнă.

Вырӑс классикӗсен произведенийӗсемпе тата чӑваш писателӗсен алҫырӑвӗсемпе паллашни пулас поэтӑн кӑмӑлне ҫӗклентерсе ярать, чӑваш чӗлхин пуянлӑхне, хӑйӗн пултарулӑхӗн вӑйне тарӑнрах туйса илме пулӑшать.

1905—1907 ҫулсенче Российӑра пӗрремӗш революци пулса иртет. Ҫакӑн чухне Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗнче вӗренекен ачасем хушшинче те революциллӗ шухӑшсем палӑрма пуҫлаҫҫӗ. Сӑмахран, унта 1905 ҫулти ноябрь уйӑхӗнче шкулта вӗренекенсен забастовки пулса иртет. Вӑл забастовка Иванова та хавхалантарать.

1906 ҫулта ҫамрӑк поэт вырӑссен „Отпустили крестьян на свободу“ ятлӑ юрри тӑрӑх ҫакӑн пек сӑвӑ ҫырать:

Хура халӑха ирӗке янӑ
Нарсӑн вунтӑхӑрмӗш кунӗнче —
Анчах ҫӗр халӑха пулаймарӗ,
Ак сире улпутсен ырлӑхӗ.

Вӑранӑр, тапранӑр, чӑваш ҫыннисем!
Тапран эс вӑрҫма, ыҫӑ халӑх!
Халӑх хӑй ҫиллине хӑпарттӑр!
Малалла, малалла, малалла!

1907 ҫулта, февраль уйӑхӗнче, Государствӑн II-мӗш думине уҫнӑ вӑхӑтра, Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗнче вӗренекенсем политикӑллӑ митингсем тӑваҫҫӗ, юрӑхсӑр учительсене (сӑмахран, Кочурова) шкултан сирме ыйтаҫҫӗ. Митингра политикӑллӑ сӑмахсем тухса калаҫҫӗ, революциллӗ юрӑсем юрлаҫҫӗ. Ҫак политикӑллӑ митингсенче пулнӑшӑн 1907 ҫулти мартӑн 7-мӗшӗнче шкултан 37 вӗренекене кӑларса янӑ. Вӗсен шутӗнче Константин Иванов та пулнӑ.

1905—1907 ҫулсенчи революци обществӑри ҫӗнӗ вӑйсене малти вырӑна кӑларса тӑратнӑ. Ҫак революци тӗлне ун пек вӑйсем чӑвашсем хушшинче те ҫитӗнсе пынӑ, кивӗ вӑйсене хирӗҫ кӗрешнӗ; ҫав кивӗ вӑйсемпе ҫӗнӗ вӑйсем хушшинчи хирӗҫӳсем тарӑнлансах пынӑ, тӗрлӗ формӑсемпе палӑрнӑ. Ку историллӗ процесс чӑваш халӑхне те, Российӑри ытти халӑхсемпе пӗрлех, 1905—1907 ҫулсенче ҫӗкленсе кайнӑ революцие хутшӑнтарасси патне илсе ҫитернӗ.

К. Ивановӑн таланчӗ шӑпах ҫак революци ҫулӗсенче йӗркеленме пуҫланӑ. „Нарспи“ поэма—1905—1907 ҫулсенчи революци вӑхӑтӗнче пиҫсе ҫитнӗ произведени.

Унта çав революцичченхи вăхăта кăтартнă пулин те пĕтĕмĕшпе илсен, пĕрремĕш революци панă шухăшкăмăл уççăнах сисĕнсе тăрать. 1905—1907 çулсенчи революцисĕр „Нарспи“ çавăн пек вăйлă произведени пулман пулĕччĕ. „Нарспи“ вăл чăннипех те пĕрремĕш революци панă парне пулса тăрать.

„Нарспи“ поэмăра авалхи чăваш ялĕн пурнăçĕпе йăлисене сăнласа кăтартнă. Çак ял уççăнах социальнăй сийсем çине уйрăлса тăрать: пĕр енче—кулаксем, тепĕр енче — чухăнсем. (Паллах, ун чухнехи ялта вăтам хресченсем те нумай пулнă, анчах Иванов вĕсене кăтартса парас задача лартман.) Пуянсен представителĕ — Михетерпе Тăхтаман, чухăнсен представителĕ — Сетнер. Силпи ялĕ, тулашĕнчен пăхсан, патриархальнăй ял пек туйăнать, анчах унăн шалти пурнăçне пысăк социальнăй хирĕçӳсем таткаласа тăраççĕ. Шăпах çав хирĕçӳсене художествăллă майсемпе уçса пани çинче никĕсленсе тăрать ĕнтĕ Иванов поэми. Революци поэта çавăн чухнехи хирĕçӳсене тарăнрах ăнланма пулăшнă.

Кунта тата çакна калас пулать: Иванов çырнă „Нарспи“ поэмăн никĕсĕнче тăракан эстетикăллă тĕп принципсем халăх кĕрешĕвĕнчен, вăл тунă ĕçсен илемлĕхĕнчен тухса тăраççĕ. Поэтăн эстетикăллă ăнланăвĕсем халăхăн малта пыракан сийĕсен эстетикăллă ăнланăвĕсем пек пулнă. Вăл пысăк та вăйлă туйăмсене пит те паха сăнласа панă.

„Нарспи“ поэмăн сăвăллă форми çĕнĕ форма мар. Вăл чăваш халăх юррисен çичĕ сыпăклă форми, çăмăл форма. Иванов, çав формăпа пултаруллă усă курса, хăватлă произведени — „Нарспи“ поэма çырнă, çакăн пек тума пысăк талантлă поэт çеç пултарнă. Çак енчен пăхсан, Ивановăн пултарулăхĕ, ăсталăхĕ мĕн тери вăйлă пулни тата та уççăнрах курăнать.

Иванов вăхăтĕнче чăвашсен аталанса çитнĕ литература чĕлхи те пулман. Шутлатăн та тĕлĕнсех каятăн: çавăн пек чĕлхе пулман чухне „Нарспи“ пек вăйлă та илемлĕ произведени çырма мĕн тери пысăк талант, пысăк шанчăк, мĕн тери пысăк хăюлăх кирлĕ пулнă! Ивановăн вара пурте пулнă,—унăн ăс та, хăюлăх та, ăсталăх та, вăй та пулнă. Çапла ĕнтĕ çак чаплă поэт пирĕн литературăна, илемлĕ литература чĕлхине пуçарса янă.

* * *

„Нарспи“ поэмăна К. В. Иванов 1907 çул вĕçĕпе 1908 çул пуçламăшĕнче çырнă пулмалла. 1908 çулти кĕркунне вара ăна, халăх хушшинче çырса илнĕ произведени тесе, „Чăваш халлапĕсемпе юмахĕсем“ ятлă кĕнекере пичетлесе кăларнă. Ăна çыриччен вăл хăйĕн ытти произведенийĕсене çырса хăшпĕр таран опыт туяннă. Сăмахран, Иванов 1907 çулта виçĕ юмах („Тимĕр тылă“, „Тăлăх арăм“, „Икĕ хĕр“) çырнă. Çав çулхинех „Выçă аптăранисем“, „Шуйттан чури“ произведенисене те çырнă.

Çак юмахсемпе сăвăсене çырнă чухне Иванов халăх творчествипе ытларах усă курнă. Анчах вăл нихăш юмахĕнче те хăйĕн творчествăллă сăн-сăпатне çухатман. Унăн кашни юмахĕ—оригиналлă произведени. Иванов юмахĕсем—поэт шухăшĕсене пăхăнтарса çырнă, социальнăй шухăшсем кĕртсе çивĕчлетнĕ произведенисем.

Ку тĕлĕшпе уйрăмах „Икĕ хĕр“ юмах, хăй пысăк мар пулин те, паллă вырăн йышăнса тăрать. Çак юмахра пĕр пуянăн икĕ хĕрĕ çинчен çырнă. Аслă хĕрĕ, ашшĕ çулĕпе пыраканскер, пуянлăха мухтать, пуянлăх умĕнче йăпăлтатса ырă ят илтет. Кĕçĕн хĕрĕ, пуянсен йăлине пăхăнмасть, тĕрĕслĕхшĕн тăрать, ашшĕ мулне мухтамасть, чăн сăмах калать.

Ашшĕ, тăван хĕрĕн таса ĕненĕвне хирĕç пырса, чăн шухăша ним пытармасăр каланăшăн ăна хăйĕн килĕнчен хăваласа кăларать: „Санра пархатар сахал, эсĕ манăн хĕрĕм мар!“—тет вăл. Çакă вăл мул çинче, суялăх çинче, этемĕн ирĕклĕхне чăрсăррăн путарни çинче тытăнса тăракан тĕнчен кашкăрла законĕ. Иванов хăйĕн произведенийĕсенче çав ирсĕр закона уçса кăтартать. Ырă курасси, çын телейĕ, ирĕклĕх укçара мар,—акă унăн творчествинчи тĕп шухăш. Этем—вăл чи вăйли, чи таси; анчах мул тĕнчин, капитализмăн законĕсем этеме çыхлантарса лартаççĕ, ăсран кăлараççĕ, этемĕн пĕлтерĕшне, вăйне путараççĕ, пĕтерсе лартаççĕ.

Иванов—поэт-гуманист. Вăл чăн-чăн этемĕн вăйĕ çине шанать, унăн чăн-чăн хакне пĕлет, вăл этеме мухтать:

Çакă çутă тĕнчере
Вăйли çук та этемрен:

Çĕрсем çинче, шыв çинче
Хуçа пулса вăл тăрать.

* * *

К. В. Иванов—поэт-лирик. Унăн лирики—гражданла лирика. Ивановăн шухăш-кăмăлĕ халăх шухăш-кăмăлĕпе пĕрлешсе, ăна уççăн палăртса тăнă. Халăха савăнтарни поэта савăнтарнă, халăха хурлантарни—хурлантарнă, чун-чĕрине ыраттарнă.

,,Нарспи" авторĕ хайĕн произведенийĕсенче общественăллă ыйтусем хускатма пĕлнĕ. Илер-ха, тĕслĕхшĕн, ,,Хальхи самана" сăввах. Иванов ăна, Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ 40 çул тултарнине хисеплесе, 1908 çулхи октябрьте çырнă.

Вăл сăвăра Чĕмпĕрти чăваш шкулне, çав шкула пуçарса яракан И. Я. Яковлевăн ĕçĕсене хакласа, Иванов çакăн пек калать:

Ырă чăваш тупăнчĕ,
Ырă ĕçе тытăнчĕ.
Чăн чăвашла сăмахпа
Хăй тăванне, чăваша,
Пырса çапрĕ чĕрине,
Пăлхатса ячĕ чĕрене.
Пăлхатнинчен питĕрех
Шухăш ӳкрĕ пуç çине.

Мĕнле шухăшсем пырса кĕнĕ-ха поэтăн пуçне?

Константин Иванов ку сăвăра тăван халăхăн ĕлĕкхи пурнăçĕ çинчен калать, патша йĕрки вăхăтĕнчи сивĕ кунсен сăнне тĕлĕнмелле уççăн, тĕлĕнмелле хăватлăн кăтартса парать:

Чăтаççĕ-ха чăвашсем,
Вĕçне çитмен-ха вĕсем.
Ĕçкĕ-çикĕ тунă чух,
Ĕçсе-çисе ларнă чух,
Юррисене юрлаççĕ,
Куççулĕпе кулаççĕ.
Чăваш! Сана ун чухне,
Чуну çĕкленнĕ чухне,
Мĕн пит асна килет-ши?
Мĕн пит чунна хĕсет-ши?
Савăнăç-и, куççуль-и
Сан куçунта куç тулли?

Çак йĕркесене çырнă чухне поэт-гражданинăн, тен, хăйĕн те чĕре тулли халăх хуйхи пулнă пулĕ... Поэт „куç-

çульпе кулать“, чăвашсем хушшинчен тухнă улпутсене, вĕсен тарçи-тĕрçисене питлет, халăха маннă чиновниксем çинчен хаяр сăмахсемпе çырать:

Анчах чăваш хушшинче
Чунĕ хытнă çынсем те
Тапаланма пуçларĕç,
Тăрса çапла каларĕç:
„Чаплă вырăн тупасчĕ,
Часрах улпут пуласчĕ“.
Тĕрлĕ çутă тӳммешĕн
Тĕнки тухать ав лешĕн,
Чăвашла та калаçмасть,
Тăванне те астумасть...

Чиновниксене — çут тӳмеллĕ этемсене, тăванне те астуман çынсене Тайăр Тимкки те, Иванов пекех, хытă питлет:

Хăвăр ахаль пурăнсан,
Эсир ырлăх тупаймăр:
Ĕçе тума чарăнсан,
Усал айне хупăнăр.
Эсир ĕççĕр пурăнсан,
Сире çынсем ылханĕç,
Сиртен юлнă ачăрсем
Сире пăхса хурланĕç...
...Сире халăх вĕрентме
Нумай укçа салатрĕ,
Сире çынна кăларма
Пĕтĕм вăйпа тăрăшрĕ.
Ухмах! Эсĕ халăха
Мĕскер усă кăтартрăн?
Выçлăх, пысăк хурлăха
Мĕскер ĕçпе пĕтертĕн?..

Халăха маннă, унăн ĕçне тума тăрăшман этемсем çинчен икĕ поэт тарăхса çырнă, çав улпутсем сĕрĕлле этемсем, патша влаçĕ майлă çаврăнса ӳкнĕскерсем, ун чухне, хура реакци пуçланса кайнă çулсенче, халăхăн малта пыракан ывăлĕсене питех те кансĕрленĕ, тарăхтарнă. Шăпах çаваănпа Иванов та, Тайăр Тимкки те вĕсене хирĕç çырмасăр чăтса тăрайман.

К. Иванов халăхăн малта пыракан сийĕсен шухăшĕсене палăртса çырнă, ăна çак тĕслĕхсем те лайăх кăтартса параççĕ.

Патша вăхăтĕнче тутар реакционерĕсем, 1905 çулхи революцирен хăраса ӳкнĕскерсем, хăйсен националистла-пантюркистла шухăшĕсене сарма тăрăшса, тутарсене Турцие куçса каймашкăн чĕннĕ. Тутар халăх поэчĕ

Габдулла Тукай националистсене хирӗç „Каймастпӑр!“ ятлӑ хаяр сӑвӑ çырать. Унта вӑл: „Эпир кунта çуралнӑ, кунта ӳснӗ, çакӑнтах эпир вилӗпӗр. Вырӑс çӗрӗпе пире хамӑр кун-çул хӑех пӗрлештернӗ“,—тесе çырнӑ.

Тутар реакционерӗсем хӑйсен реакциллӗ, национа-листла-пантюркистла шухӑшӗсене чӑвашсем хушшинче те сарма хӑтланса пӑхнӑ. Анчах чӑваш ӗççыннийӗсем, тутар ӗççыннийӗсем пекех, хӑйсен пурнӑçӗ йывӑр пулин те, вӗсем хыççӑн кайман.

К. Иванов „Хальхи самана“ ятлӑ сӑввинче, „чунӗ хытнӑ çынсем“ чӑваш хушшинче тапаланма пуçланине питлесе çырнӑ вӑхӑтрах, тутар реакционерӗсене те питлесе илет, чӑваш ӗççыннисем вӗсен çулӗпе кайманнине кӑтартса парать: „Урӑх çулпа утрӑмӑр, урӑх çӗре тухрӑмӑр“,—тет.

Çав çул—тӑван çӗршывшӑн, çӗнӗ Российӑшӑн чӗре-рен тӑрас çул пулнӑ. Иванов, вырӑс литературн тӑрӑх вӗренсе ӳснӗскер, хӑйӗн творчествине демократи çулӗ-пе аталантарса пыма тӑрӑшнӑ.

* * *

Константин Иванов вырӑс халӑх поэчӗсенчен вӗреннӗ. Вӑл Пушкинран, вырӑс халӑхӗн чи аслӑ поэтӗнчен, творчество сарӑмлӑхне вӗреннӗ, тарӑн идейӑллӑ произ-веденисем çырма вӗреннӗ; вӑл Лермонтовран çынсен чун-хӑватне, вӗсен хаярлӑхне кӑтартса пама вӗреннӗ; вӑл çынсен кӑмӑлне Кольцов пек ӑшшӑн кӑтартма пӗл-нӗ, вӗсен шӑпи çине Некрасов пек пӑхма та пӗлнӗ. Çынна, этеме Горький пек мухтанӑ!

Вырӑссен çак аслӑ писателӗсем чи малтан халӑх писателӗсем пулнӑ. К. Иванов вара, тӑван халӑхӑн ну-шине, хуйхи-суйхине, унӑн савӑнӑçне, ӗмӗчӗсене лайӑх пӗлекенскер, хӑйӗн творчествине пула халӑхпа пин-пин çыхӑпа çыхӑннӑскер, хӑйӗн учителӗсем вырӑнне Пуш-кина, Лермонтова, Кольцова, Некрасова, Огарёва суйла-са илнӗ пулсан (тепӗр хут палӑртса калӑпӑр: шӑпах халӑх поэчӗсене суйласа илнӗ пулсан), — çакӑ та вара унӑн творчествин халӑхлӑхӗ (народность) çинчен калать.

К. Иванов хамӑр халӑхӑн пахалӑхне кӑтартса па-ма вырӑс литературинчен вӗреннӗ. Вырӑс писателӗсем вырӑс халӑхӗн нацилле пахалӑхӗсене мӗнле тӗрӗс кӑ-тартса панӑ, К. Иванов та, вӗсенчен вӗренсе пынӑскер,

чăваш халăхĕн нацилле пахалăхĕсене вĕсем пекех тĕрĕс кăтартма тăрăшнă.

К. В. Иванов патша вăхăтĕнче, тискер саманара пурăннă. Питех те кĕске пулнă унăн ĕмĕрĕ. 1915 çулти мартăн 13(26)-мĕшĕнче вăхăтсăрах çĕре кĕнĕ вăл.

* *
*

К. В. Иванов совет саманине пурăнса çитеймен, вăл пирĕн вăхăтри пурнăçăн ӳсĕмĕсене курман. Поэт вилсен, пĕр виç çултан, Российăра социализмлă революци пулса иртрĕ. Çакăн хыççăн, Ленин—Сталин партийĕн наци политикине пула, Совет çĕршывĕнчи мĕнпур халăхсен, вăл шутра чăвашсен те, хуçалăхĕпе культури улăпла утăмсемпе малалла кайрĕ. Çĕнĕ поэтсем çитĕнсе ӳсрĕç. Вĕсем К. В. Ивановăн паха традицийĕсене малалла тытса пыраççĕ, пуянлатаççĕ.

Совет саманинче чăваш халăхĕн çĕнĕ ăрăвĕсем ӳс〬се çитĕнчĕç. Вĕсем ĕлĕкхи самана вăхăтĕнче пурăнса курман. Çав ăрусем иртнĕ ĕмĕре кĕнекесем тăрăх, ваттисем каласа панисем тăрăх çеç пĕлеççĕ. Ку ĕçре вĕсене К. В. Ивановăн кĕнекисем те чылаях пулăшаççĕ.

Вулакансем К. В. Иванов пурнăçне те пĕлесшĕн, вăл мĕнле ӳссе çитĕнни, вĕренни, мĕнле ĕçлени вĕсене интереслентерет. Ку тĕлĕшпе пирĕн вулакансене çак кĕнеке кăштах пулăшма пултарĕ тесе шутлатпăр.

„Чăваш халăхĕн мухтавлă ывăлĕ“ кĕнекене К. В. Ивановăн тăванĕсем каласа панисем, унпа пĕрле вĕреннĕ, ĕçленĕ юлташсен (И. Т. Трофимов, С. Н. Алексеев, М. Д. Трубина, Г. А. Молостовкин тата ыт.) асаилĕвĕсем кĕреççĕ. Хăшпĕр асаилӳсене 1940 çулта, К. В. Иванов çуралнăранпа 50 çул тултарнă кунсенче, çырнă, теприсене 1948 çулта, „Нарспи“ пичетленсе тухнăранпа 40 çул çитнĕ тĕле, çырнă.

Çак кĕнекери материалсенче чăваш литератури классикĕн сăнĕ, унăн кăмăлĕ чылаях курăнса тăрать.

К. В. Иванов питех те сăпайă çын пулнă. Мухтанма юратман вăл, пур ĕçе те тăрăшса тунă. „Нарспи“ авторĕ пĕр вăхăтрах поэт тата художник пулнă. Çакна кашни асаилӳрех курма пулать.

Асаилӳсемсĕр пуçне, кĕнекене чăваш поэчĕсен К. В. Иванова халлаласа çырнă хăшпĕр сăввисене кĕртнĕ. Ку сăвăсене пирĕн поэтсем тĕрлĕ вăхăтра çырнă. Вĕсем, кашниех тенĕ пекех, К. В. Ивановăн чăваш

литератури историйӗнчи вырӑнне, унӑн пӗлтерӗшне кӑтартса пама тӑрӑшаççӗ.

К. В. Иванов вӑхӑтӗнчех çырма тытӑннӑ сӑвӑç— Н. И. Шелепи чӑвашсен малтанхи поэчӗ çинчен „Чӑваш шӑпчӑкӗ“ ятлӑ сӑввинче акӑ мӗнле сӑмахсем калать:

Тӑван халӑх ывӑлӗ,
Хастар чӗре,
Юрру санӑн ӗмӗр юлӗ
Кӗрекере.

Чӑваш халӑх поэчӗ С. В. Эльгер хӑйӗн 1925 çулта çырнӑ сӑввинче К. В. Иванов ӗçне çакӑн пек хаклать:

Чуралӑхри чӗлхене
Шанчӑк пама курӑннӑ,
Тухас сӑвӑç-туссене
Çул кӑтартма пуçӑннӑ.

Стихван Шавлы хӑйӗн „Константин Ивановӑн юлашки сӑмахӗ“ ятлӑ сӑввинче (1940 ç.) вӑхӑтсӑр çӗре кӗнӗ поэт патша самани çине мӗн тери тарӑхса пурӑннине кӑтартса парать, „Нарспи“ авторӗн иксӗлми шанчӑк пулнине палӑртать.

К. В. Иванов çирӗм пилӗк çула яхӑн çеç пурӑннӑ, анчах вӑл хӑйӗн чунӗ тухиччен пысӑк ӗмӗтпе ӗçленӗ, „чӑвашсем вӑранасса“ чун чӗререн шаннӑ.

Яков Ухсайӑн „Иванов вӑрманӗ“ ятлӑ сӑвви революцичченхи поэт пуçласа янӑ ӗç хальхи саманара мӗнле вӑйлӑн сарӑлса кайнине кӑтартса парать.

Поэт юман пулса шавланӑ
Асаплӑ чуллӑ çӗр çинче,—
Кашни çулçи пӗр юрӑ панӑ,
Юман юрланӑ пӗр пӗччен.

Çак „юман пулса кашланӑ“ поэтӑн — Константин Ивановӑн—„йӗкелсем нумай пулнӑ“, шӑпах ӗнтӗ çав йӗкелсенчен халӗ çӗнӗ вӑрман çӗкленчӗ, ашкӑрса кайрӗ. Ку вӑл — çултан-çул аталанса пыракан чӑваш совет литератури. Çак литература вӑрман пек пуян, унӑн вӑйӗ иксӗлми чӗрӗ.

Совет поэчӗ чӑваш литературин классикӗ пирки каланӑ сӑмахсем питех те тӗрӗс:

Ӗрчевлӗ вӑрлӑх акаканӗ
Кайсан та, ӗмӗчӗ кайман.
Хитре вӑрман, сӗм-сӗм вӑрман,
Чӑваш поэзийӗн вӑрманӗ.

Чăвашсен хальхи илемлĕ литератури, Константин Иванов поэзийĕнчен пуçланса кайнăскер, хăйĕн аталанăвĕнче калама çук пысăк утăмсем турĕ. Вăл совет саманинче, çĕнĕ тапхăрта, ўссе çĕнĕ йышши литература пулса тăчĕ. Чăваш чĕлхи те питех те пуянланчĕ. Чăваш халăхĕ, вырăс халăхĕ тăванла пулăшнипе, коммунистсен партийĕ ертсе пынипе, культура фрончĕ валли талантлă çынсем нумай ўстерсе çитĕнтерчĕ. Вĕсен патриотла ĕçĕпе пĕтĕм халăх савăнса мухтанать.

В. ДОЛГОВ.

Шупашкар, 1951 çул.

АСАИЛӲСЕМ

АШШӖ ҪЫРНИНЧЕН[1]

Константин 1890 ҫулта майӑн 13-мӗш кунӗнче[2], иркине, виҫҫӗмӗш сехет тӗлӗнче ҫуралчӗ.

Вӑл вӑхӑтра пирӗн ялта чиркӳ ҫукчӗ. Приход хамӑр ялтан 12 ҫухрӑмри Макарьевка ятлӑ ялтаччӗ. Ӑна ҫавӑнта тӗне кӗртрӗмӗр.

Ҫуралсанах вӑрахламасӑр, вӑл чирлерӗ. Эпӗ ун чухне хирте ака патӗнчеччӗ; ҫавӑнта пырса каларӗҫ, ача сывмарланчӗ тесе. Ун чухне пирӗн патра пӗр Матви ятлӑ ҫын хуҫа патӗнче[3] тӑратчӗ. Эпӗ ҫав Матви пиччене, хиртен таврӑнса, ачана тӗне кӗртме кайма хушрӑм. Вӑл вара, хиртен таврӑнсан, хамӑр аттепе пӗр таван хӗрпе кайса тӗне кӗртнӗ.

Пӗр ҫул тултариччен вӑл каллех чирлерӗ, ун чухне пӗр уйӑх ытларах выртрӗ, пит начарланчӗ, вилес патнех ҫитнӗччӗ. Виҫӗ ҫула ҫитиччен вӑл час-часах чирлесе пычӗ, унтан кайран чирленине астумастӑп.

1898 ҫул, кӗркунне, хамӑр ялти шкула ҫӳреме пуҫларӗ. Виҫӗ ҫул вӗренсен, тӑваттӑмӗшӗнче хамӑн йӑмӑк Евгения[4] ӑна 1902 ҫулта вӗрентсе кӑларчӗ.

Вӑл ҫав ҫулах Чӗмпӗре кайрӗ, унтан кӗреймесӗр таврӑнса килчӗ. Вара Белебейре пӗр хӗл хула училищинче вӗренчӗ. 1903 ҫулта каллех Чӗмпӗре кайрӗ, унта 1907 ҫулччен вӗренчӗ. Ҫав ҫул, вӗсен класне салатса ярсан, киле таврӑнса килчӗ. Килте вӑл август уйӑхӗччен пурӑнчӗ. Вара августӑн иккӗмӗш кунӗнче Благо-

---

[1] Василий Николаевич ку ҫырӑва учительре ӗҫлекен вӑтам ывӑлне—Квинтилиана 1918 ҫулта е 1919 ҫулӑн пуҫламӑшӗнче ҫырнӑ. Поэт ашшӗ 1919 ҫулта вилнӗ.

[2] Датӑсене пур вырӑнта та кивӗ стильпе кӑтартнӑ.

[3] „Хуҫа патӗнче тени" тарҫӑра тенине пӗлтерет.

[4] Евгения Николаевна Иванова, Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗнчен вӗренсе тухса, учительница ятне илнӗ, малтан Кекен ялӗнче, каярахпа Ӑхпуҫ ялӗнче вӗрентнӗ. Вӑл Константин Васильевича Чӗмпӗр шкулне икӗ хут та илсе кайнӑ: пӗрремешӗнче вырӑн пулман пирки илмен; иккӗмӗш хут кайсан, И. Я. Яковлев ӑна приготовительнӑй класа илнӗ.



К. В. Иванов пурăннă çурт (Слакпуç ялĕ)

вещенска, учительсене хатĕрлесе кăларакан семинарине кĕрес тесе, кайрĕ. Икĕ эрне ытларах пурăнсан, таврăнса килчĕ.

Унтан вара килте пĕр каç выртрĕ те Чĕмпĕре кайрĕ. Чĕмпĕртен тепĕр çулне май уйăхĕнче таврăнчĕ те:

— Пĕр уйăха çеç Иван Яковлевич ячĕ,—терĕ.

— Унта пурăнни сана мĕн усă кӳрет?—тесе ыйтрăм эпĕ.

— Унта куçаратăп, хам та вĕренетĕп,—терĕ,—мана Иван Яковлевич пулăшать,—терĕ,—вăл мана гимназие кĕртесшĕн,—терĕ.

1909 çул августра таврăнчĕ те 1910 çулти октябрĕн 1-мĕшĕччен килте ĕçлесе пурăнчĕ. Унтан каллех Чĕмпĕре кайрĕ. Ăна унта чĕнсе Иван Яковлевич çыру янăччĕ.

1911 çулта киле таврăнса пĕр уйăх пурăнса кайрĕ. Унтан 1912 çулта раштав умĕн таврăнса килчĕ. 1913 çулта крещени хыççăн Чĕмпĕре кайрĕ.

1914 çулта ноябрĕн 15-мĕш кунĕнче чирлĕ тавраăнса килчĕ, ноябрĕн 16-мĕшĕнче виçĕнсе пăхрĕ: 3 пăт та $28^{1}/_{2}$ кĕрепенкĕ килчĕ. Вăл декабрĕн 5-мĕшĕччен аванланса пычĕ, унтан вара сывлăхĕ чакнăçем чакрĕ, январĕн 15-мĕшĕнче унăн йывăрăшĕ 3 пăт та $17^{1}/_{2}$ кĕрепенкĕ кăна тăрса юлчĕ. Унтан вара пĕтнĕçем пĕтсе пычĕ. Çу эрни иртсен, урама тухса çӳреймерĕ, вырăн çинчен тăрайми пулчĕ. Çапла мартăн 13-мĕшĕччен пурăнчĕ. Пит нумаях калаçаймарăмăр, мĕншĕн тесен вăйĕ пĕтнĕçем пĕтсе пычĕ. Пĕр вăхăтра пит начарлана пуçласан, амăшĕ: „вилет пулĕ, вилсен, çине мĕнле тумтирсем тăхăнтармаллине ыйтасчĕ“, терĕ. Вара эпĕ кĕтĕм те: Кĕçтенттин, эсĕ питĕ начарлана пуçларăн, вилен...[1]

---

[1] Çакăнта Василий Николаевичăн алçырăвĕ татăлать, малалли листисем çухалнă.

АМАШĔ ЕВДОКИЯ ВАСИЛЬЕВНА КАЛАСА ПАНИ

Эпĕ хам Кайраклăсем[1], Тетеçлӳ Ваçлей хĕрĕ пулнă. Эпир виççĕн пĕр тăван ӳснĕ: икĕ хĕр те пĕр ывăл. Çăварнире 24 çул тултарсан, çимĕкре 120 тенкĕ хулăмла çураçса, мана Слакпуçне Писсăр Ваçинккине пачĕç. Пурăнаттăмăр пурĕ пиллĕкĕн: ани, ман упăшка, эпĕ тата упăшка шăллĕпе йăмăкĕ.

Çулталăкран манăн малтанхи ача Кĕçтенттин çуралчĕ. Кĕçтенттин çамрăк чухнех питĕ йăваш ачаччĕ. Урамра ачасемпе вылясах çӳреместчĕ. Картишĕнче ларатчĕ те тăмран ĕнесем, лашасем, сурăхсем туса ателатчĕ. Ытти ачасем те пуçтарăнатчĕç ун патне, вăл вĕсене те тăмран вылямалли япаласем тума вĕрентетчĕ.

Йăвашне кура, Кĕçтенттине пурте, асламăшĕ те, кукаçейĕсем те питĕ юрататчĕç. Асламăшĕ, эпир уйрăлса тухсан, ăна пĕрехмай хăй патне илсе каятчĕ.

— Çывăрма асаннесем патне каятăп,—тесе тухса каятчĕ вĕсем патне.

Кукашшĕсем те ăна килмессерен хăйсем патне илсе каятчĕç. Кукашшĕсен 40—45 вĕлле пурччĕ. Пылне вара Кĕçтенттин хире чашăкпах илсе тухатчĕ, тет те, кĕписене пылпа вараласа пĕтерсен, кукамăшне вăрттăн:

— Кукамай, кĕпи какка,—тесе калатчĕ, тет.

Кукамăшĕ ăна халапсем те кала-кала кăтартнă пулас. Тата кукамăшĕсемпе юнашарах Макçăм пичче текен вĕрӳçĕ пурăнатчĕ. Ӳссе çитсен, Чĕмпĕрте вĕренме тытăнсан, Кĕçтенттин çавăн патне çӳресе, тĕрлĕ хăйне кирлĕ япаласем çыра-çыра илетчĕ.

Пĕр сакăр çул тултарсан, Кĕçтенттине хамăр ялти шкулах вĕренме патăмăр. Шкулта Кĕçтенттин аван вĕ-

---

[1] Кайраклă ялĕ Иванов çуралнă Слакпуç ялĕнчен кăнтăр енче 7 çухрăмра ларать.

ренетчĕ, учитель ырлатчĕ ăна. Вĕреннĕ чухне шавах кĕнекесем вулатчĕ.

Чĕмпĕрте вĕреннĕ чухне Кĕçтенттин кашни çулах, кашни хĕл кăшт киле таврăнса пурăнатчĕ. Ун чухне вăл хирти ĕçе питех кайман. Час-часах Василий Григорьевич ятлă учитель патне çӳретчĕ. Хăш чухне вĕсем ун патĕнче ирчченех ларса ирттеретчĕç.

— Мĕн туса ларатăр унта?—тесе ыйтсан, вăл:

— Вулатпăр, çыратпăр, тĕрлĕ япаласем çинчен калаçатпăр,—тетчĕ.

Чĕмпĕрти шкултан кăларса ярсан та, Кĕçтенттин килте нумай пурăнмарĕ. Часах таçта тухса кайрĕ.

Килте чирлесе пурăннă чухне Кĕçтенттин мана питĕ хĕрхенетчĕ.

— Эй, анне, çитĕ ĕнтĕ сана, ĕçлесе ывăнтăн пулĕ паян, выртса кан, тетчĕ. Е, кӳршĕ-пĕлĕшсен ачи-пăчи килсен, вĕсене вара манпа çулăхма памастчĕ:—Ан çыпçăнăр аннене, вăл ахаль те ывăннă,—тетчĕ.

Ман ĕçе çăмăллатас тесе, вăл мана çавăрса çу уçламалли уйран çӳпçи туса панăччĕ. Çамрăк чухне шыва та кайса килетчĕ. Пирĕн шыва кайсан, çырмаран тăвалла улăхмалла. Кĕвентесемпе пынине курсан, Кĕçтенттин кĕвентесене илетчĕ те чупатчĕ. Шывне çуршар витре тултаратчĕ те таврăнатчĕ.

Килте çынсем çук чухне, Кĕçтенттин урай çăвассинчен те именсе тăмастчĕ. Пĕрре тата икерчĕ пĕçернĕ чухне ман пата пычĕ те:

— Эсĕ тарланă, анне, кӳр-ха хам пĕçерем,—терĕ те икерчĕ пĕçерме пуçларĕ.

Ӳссе çитĕнсен ĕнтĕ Кĕçтенттин кĕлетпе лаç хушшине йăлтах йывăçсем лартса тултарчĕ. Кĕлет тăррине те хăеях сăрласа тухрĕ.

Кĕçтенттин çын килсен-тусан та питĕ кăмăллăччĕ.

— Анне, лайăхрах пăх хăнасене,—тетчĕ вăл.

Ашшĕ Кĕçтенттине питĕ юрататчĕ. Вăл хăй те ашшĕне нихăçан та сивĕ сăмах каламан.

Пĕрре, 1911—1912 çулсенче, эпир Ваçинккапа пĕрле Кĕçтенттин патне Чĕмпĕре кайса куртăмăр. Унпа пĕрле унта виç-тăват çĕре те хăнана çитсе килтĕмĕр.

Пĕрре, такшин патĕнче çапла кăмака çумне таянса ларнă чухне, Иван Яковлевич пычĕ-кĕчĕ те:

— Э, хăнасем килнĕ иккен. Аннӳ те килнĕ-им?—терĕ.

— Аттепе анне те, йăмăк та килчĕ,—терĕ Кĕçтенттин.

Чирлесен Кĕçтенттин шавах чĕрĕлессе шанатчĕ. Пĕрре эпĕ сарă кĕпе тăхăнтăм та:

— Эй, анне, эсĕ хитре кĕпе тăхăннă иккен. Сывалсан эпĕ те çапла тăхăнăп-ха,—терĕ.

Кĕçтенттин вилсен, йĕре-йĕре пулĕ çав, пĕтĕм шăлсем ӳксе пĕтрĕç. Сывлăхăм йăлтах начарланса юлчĕ. Ашшĕ те питĕ хуйхăрчĕ.

1940.

АСЛӐ ЙӐМӐКӖ МАРИЯ ВАСИЛЬЕВНА АСА ИЛНИ

Эпӗ 1893 çулта, пиччерен виçӗ çул кайран çуралнӑ. Хама тата килти пурнӑçа эпӗ пӗр 5—6 çулта чухне астума тытӑннӑ. Ун чухне аттепе пӗр тӑван Евкен аппа мана хӑйпе пӗрле шкула, хӑй вӗрентнӗ çӗре, илсе çӳретчӗ. Шкул çав çулсенче чиркӳ хурал пӳртӗнчеччӗ. Мана доска тыттаратчӗ те, эпӗ лараттӑмччӗ вара урайӗнче айкашса. Пичче ун чухне вӗренме пуçланӑ пулас ӗнтӗ, анчах ӑна чипер астӑваймастӑп.

Асанне пичче çинчен: вӑл пӗчӗккӗ чухне чирлекелетчӗ, тесе калатчӗ. Калаçма вӗреннӗ чухне пичче супӑне „патюка" тесе каланӑ, тет. Пӗрре мунчана кайрӑмӑр, тет, те, пичче йӗрме тытӑнчӗ, тет. Кӑна йӗрме чарас тесе, тем те илсе пытӑмӑр, тет. Ку шав чарӑнмасть, тет. Вара, супӑнь парсан тин, çавӑнтах лӑпланчӗ тет.

Асанне пирӗн пиччене питӗ юратнӑ. Ачашлатчӗ ӑна, çурӑмӗнчен лӑпкатчӗ. Вӑл питӗ сывлӑхлӑ, хулӑм карчӑкчӗ. Калаçма питӗ шепчӗ. Тем-тем те астӑватчӗ, пире тем çинчен те каласа кӑтартатчӗ.

Асатте питӗ усал, алама[1] пулнӑ. Вӑл хӑй ачисене те чей ӗçтерместчӗ, тет. Чей ун чухне тин кӑна тухнӑ пулнӑ.

Пӗчӗккӗ чухне чирӗнчен сыватас тесе, аттесем пиччене тӗрлӗ тухтӑрсем патне илсе çӳренӗ. Больница çав вӑхӑтра Белебейра та Слакра пулнӑ. Вӑл çапах та час сывалса çитеймен.

Аттесем пӗрре, пиччене сыватас тесе, юмӑç карчӑк патне те кайса пӑхнӑ. Лешӗ пусма ларакан юлашки хура пустарса чӳклеттерчӗ, тет. Пичче пурӗ-пӗр сывалайман. Вара анне юмӑçа тек вӑрçатчӗ.

— Кунтан пуçне пултӑр юмӑç патне çӳресси. Юлашки хура пустарчӗ усал,—тесе ылханатчӗ.

---

[1] *Алама*—начар, киревсӗр тенине пӗлтерет, пушкӑрт сӑмахӗ.

Пичче пĕчĕкренпех йăваш пулса ÿснĕ. Ачасемпе çапăçса-туса çÿремен. Анне çапла калатчĕ:

— Вылянă чухне пĕр-пĕр япала-мĕн çĕмĕрсен-тусан çиленеттĕмччĕ те: „Кÿр-ха кăна хĕнем пĕрре. Вырт урайне!" тесе калаттăм, хам хулă илме тухса кайнă пек тăваттăм, тет. Ача вара урайĕнче хам таврăниччене пĕр хусканмасăр выртатчĕ, тет.

Эпĕ пулсан аннене тыттармăттăм. Лупас çине кăна хăпарса ларăттăм.

Хамăр ялта ик-виç çул вĕренсен, Евкен аппа пиччене хăйпе пĕрле çак Кикен ялне илсе килсе вĕрентнĕччĕ. Вăл кунта пĕр çул вĕренчĕ.

Шкулта пичче аван вĕреннĕ. Кайран эпĕ те Евкен аппа патне Ăхпуçне вĕренме кайсан, Евкен аппа мана:

— Пиччу аван вĕренетчĕ, эсĕ начар, — тетчĕ. Çавăнпа вăл та пиччене юрататчĕ. Ăна Чĕмпĕре те вĕренме хăех илсе кайса кĕртнĕччĕ. Анчах Чемпĕре малтанхи хут кайсан, вăл çулхине чăваш шкулĕнче приём пулман пирки, вĕсем унтан калле таврăнса килчĕç те пичче тепĕр çул Белебейре вĕренчĕ. Унта ăна, йăвашскерне, хула ачисем кÿрентернĕ пулас. Çавăнпа вăл тепĕр çулхине, Белебейра начар тесе, Чĕмпĕрех вĕренме кайрĕ.

Чĕмпĕрте вĕреннĕ чухне вăл киле çулласенче кăна таврăннă. Хĕлле, инçе пирки, пĕрре те таврăнман. Пире валли хăйпе пĕрле тĕрлĕ кăранташсем, кĕнекесем илсе килетчĕ. Çавăнпа эпир пиччене çуркуннеренпех кĕтме тытăнаттăмăр. Юр кайса пĕтсен, анне пире вăрмана хурăн кăчăки татма яратчĕ. Вăрмантан таврăннă чухне вара эпир: „пичче килнĕ-ши, çук-ши?" тесе тавлашса чупаттăмăр.

Каникулсене киле таврăнсан, атте пиччене те пирĕнпе пĕрле хире ĕçлеме илсе каятчĕ. Вăл сÿре те тунă, утă та çулнă. Питĕ лайăх астăватăп: утта вăл выртса çулатчĕ[1]. Пысăклансан вара, пичче килте тĕрлĕ столярнăй ĕçпе хăтланатчĕ: сĕтелсем, шкапсем, кĕленче алăксем турĕ вăл, пÿрте штукатурить тунă чухне те ĕçлерĕ.

Эпир пурĕ виçĕ хут та çунса кайнă. Чи малтан, эпĕ 11 çулта чухне, эпир аçа çапнипе çунтăмăр. Çуннă хыççăн атте малтан пĕчĕк çурт лартрĕ, унтан, час-часах

---

[1] „Выртса çулать" тени сулăмлăн çулса, паккуса сарлакан илсе пырать тени пулать.

çунса пынă пирки, чул çурт лартма шут тытрĕ. Чул çурт лартнă чухне, картишне илсе килсе тăкнă тăмсенчен, извеçсенчен пичче тĕрлĕ кĕлеткесем т ă в а т ч ĕ: ĕнесем, лашасем, сурăхсем, çын кĕлеткисем те. Çавăн чухне вăл Праски[1] кĕлеткине те тунăччĕ. Тытăнсах ĕçленĕ пулсан, вăл питĕ аван скульптор та пулнă пулĕччĕ.

К. В. Иванов амăшĕ
Евдокия Васильевна Иванова

Çапла, пирĕн пичче пур ĕçе те тума пултаратчĕ. Витре те тĕпленĕ вăл, кăмака та тунă. Чĕмпĕртен х ă в а л а с а кăларнă хыçăн, вăл землемер ĕçĕпе те айкашса пăхнă. Пĕр çулхине вăл Н. Ф. Беляевпа пĕрле Хусан кĕпĕрни тăрăх çĕр виçсе çӳренĕ.

Чĕмпĕрте вĕренме пăрахсан, пичче, малалла вĕренес ĕмĕте çухатмасăр, малтан Благовещенски семинарине кĕме кайса пăхрĕ. Анчах тем сăлтавпа кĕреймесĕрех таврăнчĕ. Вара тепĕр хут Чĕмпĕре тухса кайрĕ те унта кĕнекесем куçарас ĕçе тытăннă.

Сахал мар ларнă ĕнтĕ вăл куçару ĕçĕпе, сахал мар тертленнĕ юлташĕсемпе пĕрле. Юратнă-и вăл ку ĕçе, юратман-и?—ăна татса калама пултараймастăп.

Çак вăхăтра хăй сывлăхне сыхлайман çав пичче те: выçлă-тутлă пурăннă, ĕçлеме нумай ĕçленĕ. Иван Яковлевич мĕн каланă, çавна тунă.

— Иван Яковлевич мана питĕ юрататъ,—тетчĕ пичче.—Манпа вăл тĕрлĕ япаласем çинчен те калаçать, тĕрлĕ ĕçсем çинчен те канашласа пăхать,—тетчĕ. Ферма тунă чухне те Иван Яковлевич пиччене чĕнсе унти

[1] Праски—К. В. Ивановăн вăтам йăмăкĕ.

çуртсене мĕнле тăвасси çинчен калаçса, пур плансене те пиччене тутарнă.

Пичче хăй те Иван Яковлевича юратнă. Нихăçан та ун çинчен пĕр усал сăмах та калаçман. Мĕнле те пулин произведени çырсан, пуринчен малтан Иван Яковлевича кĕрсе вуласа паратăп, тетчĕ.

Çырнă япаласем нумайччĕ пиччен, пĕр чылаях пысăк арчаччĕ. Арчин тăршшĕ пĕр виçĕ шит ытла, урлăшĕпе çӳлĕшĕ икĕ шите яхăнччĕ. Çырнă хучĕсене халĕ салатса пĕтернĕ пулĕ ĕнтĕ. Пьесăсем нумайччĕ. Анчах нумайăшне çырса пĕтерейменччĕ. Çырнă та пăрахнă, çырнă та пăрахнă.

Пьесăсенчен пĕри „Шуйттан чури". Квинтилиан[1] ун çинчен:– Кăна çырса пĕтереймен, хам тытăнса пăхам-ха, тăваймăп-и,—тетчĕ. Те çырса пĕтернĕ ĕнтĕ вăл ăна, те тытăнман,—пĕлейместĕп.

Пĕр тетрадĕнче чӳк кĕллисене çырса илнисем пурччĕ. Вĕсене вăл Кайраклăри Макçăм старикрен çырса илнĕччĕ пулас. Асаннерен те çапла: ĕлĕкхи пурнăç çинчен каласа пар-ха, тесе ыйта-ыйта пĕлсе çырнисем чылайччĕ.

„Нарспи" сюжетне пиччене асанне каласа кăтартнă пуле, тесе шухăшлатăп эпĕ. Асанне пире Силпи ялĕ çинчен:—унта малтан чăвашсем пурăннă,—тесе калатчĕ.—Кайран улпут пырса тухсан, чăвашсем тарса пĕтнĕ,—тетчĕ.—Çырасса „Нарспине" Чĕмпĕрте çырнă пулĕ, килте çырнине курман.

Пурăнасса пичче тĕрлĕ вăхăтра тĕрлĕ çуртсенче пурăннă: çӳлти зданире канцеляри çумĕнче те, çĕнĕ зданире те, малтан кĕтесри пӳлĕмре, юлашки çул—çав пӳлĕм çумĕнчинче. Хăй ăçта та пулин тухса кайнă чухне вăл мана час-часах хăйĕн пӳлĕмне тирпейлеме каласа хăваратчĕ.

— Тĕрлĕ çырусене кăна ан ухтар эсĕ, ман унта секретсем пур,—тетчĕ вара хăш чухне.

Пĕрре çапла темле праçник умĕн эпĕ пиччен пĕтĕм пӳлĕмне, чӳречисене-мĕнĕсене пĕтĕмпех, пурăпах тасатса, çуса хăварсаттăм. Анчах каçхине, хăй таварниччен, пӳлĕме вĕренекен ачасем кĕрсе ларнă та кайран лампине сӳнтерсе хăвармасăрах тухса кайнă пулнă. Ирхине пичче тепĕр хут чĕнсе кайрĕ те:

[1] Квинтилиан—К. В. Ивановăн аслă шăллĕ.

— Пăх-ха, мĕн пулнă сан пӳлĕменте,—тесе кулкаласа уçса кăтартрĕ.

Пĕтĕм сĕтелсене, чӳречесене, стенасене лампăран тухнă хăрăм хуп-хура сырса илнĕ. Манăн ирĕксĕрех тепĕр хут çуса тасатмалла пулчĕ.

Çапла ку чухне те пичче леш ачисене вăрçмарĕ, кулкаланипех ирттерсе ячĕ.

Чĕмпĕрте эпир Квинтилианпа вĕреннĕ чухне пичче пире питĕ пăхатчĕ. Пĕрре Квинтилиана та мана та пальто илсе парсаччĕ.

Шкулта вĕренсе пурăннă чухне пичче пĕртте чиркĕве кайма юратмастчĕ.



К. В. Иванов ашшĕ
Василий Николаевич Иванов
К. В. Иванов ӳкерчĕкĕ.

— Эх, ку чиркӳпе ĕнтĕ!—тетчĕ час-часах тарăхса. Анчах Иван Яковлевич чиркĕве кайман преподавательсене юратмастчĕ. Çавăнпа пичче, Иван Яковлевича кӳрентересшĕн мар пулса кăна, чиркĕве пыркалатчĕ те кĕлĕ пĕтичченех пĕр сăхсăхса пăхмасăрах тухса каятчĕ. Пирĕнпе те пичче:

— Турă пур-им вара?—тесе турра ĕненмесĕр калаçатчĕ.—Эпĕ вилсен, мана чиркĕве илсе каймасăр пытарăр,—тетчĕ.

Ăна кура атте те чиркĕве çӳреме пăрахрĕ.

Аттесем Чĕмпĕре пырсан, пичче вĕсен портречĕсене кăмрăкран тунă кăранташпа çырса хăварнăччĕ. Атте сăнĕ анненнинчен те тĕрĕсрех ӳкнĕччĕ. Чĕмпĕре пăрахутпа пынă чухне аттен сулахай куçĕ кăштах çилпе пăсăлнăччĕ. Портрет çырнă чухне пичче аттен пăсăлнă куçне те çаплипех туса хăварнăччĕ.

Пичче киле чирлесе таврăнсан, атте Иван Яковлевич çине тарăхатчĕ. Пичче чирленĕ çулхине Иван Яковле-

вичсем çемйипех таçта канма кайнă пулнă. Çавăнпа атте пиччене çапла калатчĕ:

— Хăйсем канма кайнă. Сана мĕн тума вăл çулла пĕр уйăха та пулин канма памарĕ?—тетчĕ.—Ачаран уссине нумай курчĕ те, пăхма, сывлăхне упрама пĕлмерĕ,—тетчĕ.

Вара атте пиччене питĕ сыватма тăрăшрĕ. Тĕрлĕ больницăсене çÿрерĕç. Анчах усси пулаймарĕ.

Пичче вилсен, пирĕн пата пĕрре ун юлташĕ Пазухин[1] килсе кайрĕ. Питĕ кăмăллă çынччĕ вара.

Тепре чăваш шкулĕнчи учитель Иван Степанович клишесем шыраса пынăччĕ.

1940.

---

[1] *П. В. Пазухин*—чăваш юррисен кĕнекин авторĕ, К. В. Ивановăн çывăх тусĕ. Империализм вăрçинче вилнĕ.

ПИЧЧЕ ÇИНЧЕН АСА ИЛНИСЕМ

(*поэтăн вăталăх йăмăкĕ
Перасковья Васильевна
Иванова çырнă*)

Манăн пичче Константин Васильевич Иванов Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕренетчĕ. Вăл çав шкула епле кайса кĕнине эпĕ астăваймастăп, мĕншĕн тесен ун чухне эпĕ тăвата çулта çеç пулнă. Аттесем каланă тăрăх, вăл Чĕмпĕрти шкула хăй вунвиççĕре чухне, 1903 çулта, кайса кĕнĕ. Ана унта аттен тăван йăмăкĕ, пĕр çул маларах çав шкултан вĕренсе тухнă хыççăн ялта учительницăра ĕçленĕскер, вырнаçтарнă.

Эпĕ пичче каникулсене килсе çӳренисене лайăх астăватăп. Хĕлле вăл хĕлĕпех Чĕмпĕрте пурăнатчĕ, çулла яла таврăнатчĕ.

Эпир, çемьери кĕçĕн ачасем, пиччене питĕ юрататтăмăр, вăл кашни килмессеренех тем пекех хавасланаттăмăр. Хамăр ялтан икĕ çухрăмри чугун çул станцийĕнчен вăл яланах çуран килетчĕ. Ял тулашĕнче выляса çӳрекен ачасенчен кам та пулин вăл килнине курсан, хăвăртрах пирĕн пата чупса çитсе: „Пиччу килет! Пиччу килет!“—тесе кăшкăрса яратчĕ те, эпир вара, чикеленсе каясса пĕлмесĕр, пиччене хирĕç вĕçтереттĕмĕр. Юратнисĕр пуçне, эпир, пĕчĕк ачасем, пичче çине тĕлĕнсе пăхаттăмăр. „Епле-ха вăл пирĕн ялти çамрăксенчен никам çитсе курман инçетри Чĕмпĕрте пурăнать?“ тесе шухăшлаттăмăр. Тĕттĕм чăваш ялĕсенче ĕлĕкхи вăхăтра инçе çула тухса çӳрекенсем çукпа пĕрехчĕ.

Пире пичче пуççенчен çупăрласа юрататчĕ, Атăл çинчен, вĕçĕ-хĕррисĕр тăсăлса выртакан шыв тăрăх çӳрекен пăрахутсем çинчен, Чĕмпĕрте вĕренекен ачасем çинчен илемлĕ калавсем каласа паратчĕ, тĕрлĕ картинăсем кăтартатчĕ. Эпир унăн калавĕсене пĕр сăмах

сиктермесĕр итлесе лараттăмăр. Вăл калавсем пире, пĕчĕкçĕскерсене, юмахри асамлă тĕнчене куçарнă пек туйăнатчĕç.

Пичче килнипе мĕн чухлĕ хытă савăнаттăмăр, çавăн чухлĕ ытларах хурланса юлма тиветчĕ пире вăл килтен тухса кайнă самантсенче. Ăна ăсатма ушкăнĕпех станцине каяттăмăр. Поезд çитсе чарăнсан, пичче, пирĕнпе сывпуллашса, вагон картлашкисем çине хăпарса тăратчĕ те поезд мĕн куçран çухаличченех пирĕн çине салхуллăн тилмĕрсе пăхатчĕ. Эпир, нимĕн тума пĕлмен пирки, поезд хыççăн макăра-макăра чупаттăмăр, пичченe илсе кайнă поездăн тĕтĕмĕ сирĕлсен те час лăпланаймастăмăр.

* * *

1907 çул. Март уйăхĕ. Тӳпене кармашса чылай улăхнă çур хĕвелĕ хĕртсе пăхать. Пирĕн анне, килкартинче ĕçлесе çӳрекенскер, пӳрте хăшкăлтатса чупса кĕчĕ те пуриншĕн те савăнмалли хыпар пĕлтерчĕ:

— Кĕçтенттин таврăннă! Станцирен килнине куртăм.

Çак хыпар аттене пĕртте хаваслантармарĕ. Вăл теменшĕн хыпăнса ӳкнĕ пек пулса, аннене çапла каларĕ:

— Мĕн те пулин пулнă пулĕ-ха. Е чирленĕ-и, е шкултан кăларса янă-и...

Чăнах та, пичче киле çитсе кĕнĕ-кĕменех, хăйĕн „инкекĕ" çинчен каласа пачĕ. Ăна Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕренекенсен забастовкине хутшăннăшăн кăларса янă иккен. Çитменнине нимĕнле шкула та вĕренме кĕме ирĕк паман хутпа кăларса янă.

Ку çура тата çăва пичче килтех пурăнса ирттерчĕ. Вăл кил таврашĕнчи ĕççемпе тĕрмешкелетчĕ, хирте те ĕçлетчĕ. Хăйĕн вĕренес ĕмĕчĕ çав тери пысăкчĕ. Çав ĕмĕтпе вара вăл август уйăхĕнче Благовещенскри учительски семинарине кайрĕ. Паллах, вăл кунта хăйне Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнчен мĕншĕн кăларса яни çинчен калама пултарайман, çавăнпа та экзамене тăрас умĕн: „Эпĕ килте кăна вĕреннĕ", тесе пĕлтернĕ. Çапах та пиччен ĕмĕчĕ пурнăçа кĕреймен: экзаменре вăл закон божийпе двойка илнĕ те, ăна вара ку шкула вĕренме илмен.

Благовещенскран таврăнсан, пичче килте пĕр çĕр кăна выртрĕ. Тепĕр кунне ирхине ирех Чĕмпĕре тухса

кайрĕ. Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн инспекторĕ И. Я. Яковлев ăна вырăсла кĕнекесене чăвашла куçарма хушнă пулнă. Пичче вара çак ĕçпеле тăрăшса ĕçлеме тытăннă. Пĕр çул иртнĕ хыççăн, май уйăхĕнче, вăл пĕр уйăхлăха киле таврăнчĕ. Атте ăна Чĕмпĕре урăх ярасшăн мар пулчĕ, вăл пиччене мĕнле те пулин шкултан вĕрентсе кăларасшăнччĕ. Аттепе пичче хушшинче пĕчĕк харкашу пулса иртрĕ.

— Эсĕ капла сĕтĕрĕнсе çӳресе ниепле шкултан та вĕренсе тухаймăн, ĕмĕрлĕхех вĕренмен çын пулса юлăн,—тет атте.

— Çук, атте, мана И. Я. Яковлев учитель ятне илме пулăшма пулчĕ. Çав хисеплĕ ята эпĕ илетĕпех,—ăнлантарать пичче. Калаçкаланă хыççăн вĕсем часах пĕр-пĕринпе килĕшрĕç. Атте вара ăна Чĕмпĕре лайăх кăмăлпах ăсатса ячĕ.

Малашнехи çулсенче те пичче киле килсех тăратчĕ. Эпĕ вăл 1912 çулта раштав уйăхĕнче яла таврăннине лайăх астăватăп. Пичче вăл вăхăтра „Нарспи" авторĕччĕ ĕнтĕ. Килте кăштах пурăнкаланă хыççăн вăл кӳршĕри Кайраклă ялне кайрĕ. Унта пирĕн кукка пурăнатчĕ. Пиччепе пĕрле эпĕ те ерсе кайрăм. Çак сĕм вăрман варринче ларакан тĕттĕм чăваш ялĕнче вăл вăхăтра чăваш йăлисем, юмахĕ-халапĕсем, юрри-сăввисем нихăш вырăнтинчен те лайăхрах сыхланса усраннă. Кĕçтенттин пичче халăх йăлисене сăнама, унăн юррисен илемлĕ кĕввисене, юмах-халапĕсене итлеме питĕ юрататчĕ. Ку хутра та вăл Кайраклă ялне çав шутпах кайса çӳренĕ темелле.

Раштавра, святка вăхăтĕнче, ялти çамрăксем ял тăрăх çӳреççĕ, кашни хура пӳртех кĕре-кĕре тухса, хăйсен пултарулăхĕсене кăтартаççĕ. Эпир те пиччепе иксĕмĕр çав хура пӳртсене кĕрсе çӳрерĕмĕр, çамрăксен сăвви-юррисене итлерĕмĕр, ташшисене курса савăнтăмăр. Çамрăксем саланса пĕтнĕ хыççăн куккасем патне кайма тухрăмăр. Пичче мана çул çинче çапла калать:

— Халăх юррисене, йăлисене, уявĕсене пĕтĕмпех хут çине çырса илес пулать, унсăрăн вĕсем çухалса пĕтме пултараççĕ. Халăхăн историне пĕлес тесен, нимĕнрен малтан çав материалсене пĕлмелле,—тет.

Тепĕр кунне пичче ялти чи ватă çын Макçăм мучи патне кайрĕ. Макçăм старик питĕ нумай халапсемпе юрăсем пĕлетчĕ тата тĕрлĕ майсемпе юмăç пăхма ăста-

ччĕ. Пичче ку старик патне хăйĕн „Нарспи“ поэмине çырнă тапхăрта та нумай çӳренĕ пулмалла. „Нарспи“ поэмăри суккăр юмăç—шăп та шаях çав старикĕн сăнарĕ.

Кайраклă ялне пичче киле кашни таврăнмассеренех кая-кая килетчĕ. Эпĕ малтанах вăл унта мĕн шутпа çӳренине ăнлансах çитерейместĕм, кайран кăна тавçăрса илтĕм. Поэт халăх йăлисене, юмахĕ-халапĕсене, чăваш халăхĕн кулленхи пурнăçне сăнаса, вĕренсе пынă иккен. Халăх пурнăçне тĕплĕн пĕлни ăна хăйĕн произведенийĕсене витерӳллĕ, илемлĕ тата чĕрене кайса тивмелле çырма май панă.

Пичче ялсенче çӳренĕ чух, халăх юррисемпе халапĕсене пухнисĕр пуçне, халăх хушшинчи типсене те пайтах сăнанă. Вăл хăй, халăх хушшине тухсан, сахал калаçатчĕ, çынсем мĕн каланине итлеме юрататчĕ.

Чĕмпĕре вăл ку хутра 1913 çулта январь уйăхĕнче кайрĕ. Тăван ялĕнче вăл вилес умĕн юлашки хут пурăнса курчĕ. 1914 çулта ноябрĕн 15-мĕшĕнче пичче, хăрушă чирпе чирленĕскер, Слакпуçне пуçĕпех таврăнчĕ.

Ăна киле манăн иккĕмĕш піччем, Квинтилиан, Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕренсе пурăнаканскер, илсе килчĕ. Вăл вăхăтра эпĕ хам Белебейре, хамăр ялтан çирĕм çухрăмри хулара, вĕренеттĕм. Кĕтмен-туман çĕртенех ман патăма атте пычĕ те: „Кĕçтенттин чирлĕ таврăнчĕ, сана курасшăн“, тесе пĕлтерчĕ. Эпĕ шкул пуçлăхĕсенчен отпуск ыйтса илтĕм те аттепе пĕрле киле ларса кайрăм.

Пичче ун чухне выртмаллипех выртмасчĕ-ха, ура çинчех уткаласа çӳретчĕ. Шухăшĕ-кăмăлĕ хăйĕн пĕртте салхуллă марччĕ, чиртен сываласса ĕненсех пурăнатчĕ. Икĕ кунтан Квинтилиан пичче, Кĕçтенттин пиччене илсе килнĕскер, каялла Чĕмпĕре тухса кайрĕ, эпĕ те Белебее кайрăм.

Яла таврăннă хыççăн—ноябрĕн 15-мĕшĕпе декабрĕн 5-мĕшĕ хушшинче—пичче кăштах сывалнă пек пулчĕ, унăн ӳт-тирĕ те хутшăнса пычĕ. Вăл вилнĕ хыççăн эпĕ унăн пĕр çырăвĕн черновикне тупса вуларăм. Ăна Кĕçтенттин Чĕмпĕрте хăйне сыватса пурăннă тухтăр патне çырнă пулнă. Акă мĕн çырнăччĕ вăл унта:

„Эпĕ кунта ялти хресчен апачĕпех, анчах сиплĕ апатпа пурăнса, хама хам авантарах туйма пуçларăм,

сывалма тытăнтăм. Чиртен тĕппипех сывалса çитессе шанатăп“.

Анчах ӳпке чирне ятарласа сыватмасăр, пĕр „ялти сиплĕ апатпа“ кăна, хăвăрт аталанса пыракан процеса тытса чарманиепле те май пулмарĕ. Çавăнпа та пичче кăшт тӳрленнĕ хыççăн часах тепĕр хут начарланма, чакнăçемĕн чакса пыма пуçларĕ.

Хĕллехи каникулсем пуçланчĕç. Эпир: аслă аппа, нумай пулмасть Чĕмпĕртен вĕренсе тухнăскер, Квинтилиан, Чĕмпĕрте вĕренекенскер, тата эпĕ—пурте киле пухăнтăмăр. Пирĕн Кĕçтенттин пĕтĕмпех пĕтсе, хухса кайнă, вырăн çинче выртмаллипех выртать. Çапах та эпир килнипе питĕ хавасланса ӳкрĕ вăл: тăтăшах вырăн çинчен тăра-тăра ларать, ун çинчен-кун çинчен ыйтса пĕлет, калаçать, кулкалать. Нимĕнрен ытларах Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ пирки тĕпчесе пĕлет. Вилесси çинчен шухăш та çук. Унăн пĕтĕм ĕмĕчĕ—çуркунне иртсенех пĕр-пĕр пушкăрт ялне кайса кăмăспа сывалма тытăнасси. Çак шухăш ун пуçĕнчен те тухма пĕлмест.

— Акă çуркунне çиттĕр-ха. Виç-тăвата уйăх хушши кăмăс ĕçсе пурăнăп та, кĕркунне, сывалса çитсе, каллех хам ĕçĕмсене тума тытăнатăп,—текелесе илет вăл калаçура çине-çинех.

Анчах кăмăса кайма пайтах укçа кирлĕ пулнă. Пичче хăй атте-анне пулăшасса ĕмĕтленнĕ, Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ вăл унта ĕçленĕ чухнехи ĕç укçине ярса парасса шанса тăнă пулмалла.

Каникулсем хăвăрт иртсе кайрĕç. Эпир, тĕрлĕ çĕрте вĕренекенсем, каллех тĕрлĕ çĕрелле салантăмăр. Ун чухне Кĕçтенттинпа урăх курнăçас çукки çинчен пирĕн пуçра шухăш та пулман. Кĕçтенттин пичче хăй те пачах та шухăшламан ăна вăхăтсăрах вилĕм çапса хуçасси çинчен. Ĕмĕт пире улталарĕ: ман аппапа аслă пичче Кĕçтенттина чăнах та урăх кураймарĕç.

Çуркуннехи каникула тухасси вун-вуник кун кăна юлнăччĕ,—атте каллех ман пата Белебееваскавлăн пырса çитрĕ. Ку хутра вăл хăрушă хыпарпа килчĕ.

— Пиччу питĕ начар, ăна пăхма санăн киле таврăнмалла пулать,—тесе пĕлтерчĕ вăл хуйхăллăн.

Шкул пуçлăхĕнчен ыйтса, эпĕ çавăнтах киле таврăнтăм. Пичче уйрăм пӳлĕмре вырăн çинчен тăраймиех выртать. Эпĕ шăппăн ун пӳлĕмне кĕрсен, вăл, хавшаса

çитнĕ юлашки вăйне пухса, аран-аран пуçне çĕклерĕ те ман çине пăхрĕ:

— Эсĕ çитрĕн те-им? Эпĕ ак çаплах сывалса çитейместĕп-ха,—терĕ вăл кăкăр ăшĕнчен хăйăлтатса тухакан сассипе. Хăй вырăн çинчен пачах та тăраймасть. Ура çинче çӳренĕ чух вăл, хăйĕн температурине хăйех виçсе, тĕплĕн кăна хут çине çырса пыратчĕ. Халĕ ку ĕçе тума мана хушрĕ. Ку кунсенче температури тапхăр-тапхăр 39° çитичченех ӳссе каятчĕ, пичĕ вут пек пĕçерсе тăратчĕ, куçĕсем кăвар пек çунатчĕç. Хăш чухне вăл тĕкĕр витĕр нумайччен хăй çине пăхса выртатчĕ.

— Шалт шурса кайрăм... Çапах та вăл-ку нимӗнех те мар-ха, чирлĕ чух çын яланах сăнран ӳкет. Акă çăва тухам-ха, ун чух кăмăса кайса часах сывалса çитĕп, ӳтĕм те хутшăнĕ, сăнăм та кĕрĕ,—тетчĕ вăл салхуллăн сывласа.



К. В. Ивановăн вилтăпри çине лартнă памятник (палăк)

Кăмăса кайса сываласси çинчен пичче мĕн юлашки кунĕсем татăличченех ĕмĕтленсе пурăнчĕ. Анчах аттепе анне Кĕçтенттин сывăласси пулас çук тесех шутласа пурăннă, мана çеç пĕлтермен кун çинчен. Çавăн пирки эпĕ те, пичче пекех, хамăр киле часах вилĕм килсе кĕрессе пачах та шанман.

Мартăн 13-мĕшĕнче, каçхине 10 сехет тĕлĕнче, мана, пичче патĕнче лараканскере, анне пырса улăштарчĕ. Эпĕ çывăрма выртрăм. Нумайччен эпĕ пичче çинчен шухăшласа çывăрса каймасăр асаплантăм. Халĕ кăна тĕлĕрсе кайма тытăннăччĕ,—анне ман пата шăппăн утса пычĕ те ерипен аллипе хулпуççирен сĕртĕнчĕ:

— Тăр-ха... пиччу аптраса çитрĕ. Анчах вăраххăн, нимĕн те ан калаç,—терĕ вăл мана.

Эпĕ пичче вырăнĕ умне пырса тăтăм. Пичче никама та паллаймасть, куçĕсем улшăнса кайнă, сывлăшĕ аран анчах тухать. Унăн умĕнче эпир виççĕн: атте, анне тата эпĕ. Пĕр çирĕм минут хушши эпир нимĕн шарламасăр тăтăмăр. Пиччен кăкăрĕ йывăррăн çĕкленет, пырĕ хăйкăлтатать,—сывлама сывлăш çитмест. Сывлăшĕ тухса кайиччен пĕр-ик минут малтан пичче сасартăк сылтăм аллине çĕклерĕ те уççăнах çапла каларĕ:

— Йăнăш пулчĕ-им ĕнтĕ?..—терĕ.

Ку унăн юлашки сăмахĕсем пулчĕç. Сывлăша çĕкленнĕ алли стена çумне çапăнса вăйсăррăн вырăн çине ӳкрĕ, поэт сывлама чарăнчĕ.

Вăл мартăн 14-мĕшĕнче тул çутăлас умĕн вилчĕ. Виçĕ уйăх иртсен, Кĕçтенттинăн Чĕмпĕрти япалисене Квинтилиан илсе таврăнчĕ. Унта унăн алçырăвĕсем, дневникĕсем, йывăçран тунă пичетлемелли машинка тата ытти япаласем пурччĕ.

1940.

И. Т. ТРОФИМОВ

К. В. ИВАНОВ ЧӖМПӖР ШКУЛӖНЧЕ

Манӑн ҫамрӑк вӑхӑт Чӗмпӗр шкулӗнче иртрӗ. Унта Константин Васильевичпа курса калаҫнисем, пӗр телейлӗ тапхӑр пӗрле ӗҫленисем халӗ те, ӗнер кӑна пулса иртнӗ пек, асра тӗрӗленсе тӑраҫҫӗ.

Эпӗ унпа пӗр вӑхӑтрах, 1903 ҫулти кӗркунне, Чӗмпӗрти чӑваш шкулне пӗрремӗш класа вӗренме кӗтӗм. Вунвиҫӗ ҫулхи Константин, ялта пуҫламӑш шкул пӗтернӗскер, приготовительнӑй класа вырнаҫрӗ. Эпӗ чылай ҫулсем иртсен ҫакна пӗлтӗм: ӑна „тӗнче хӗрринчен", инҫетри Пушкӑрт ҫӗрӗнчен, ашшӗпе пӗр тӑван аппӑшӗ Евгения Николаевна илсе килнӗ иккен.

Хальхи ҫамрӑксене ӑнлантарса парас тесе, Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗ ҫинчен пӗр-ик сӑмах каласа парас кӑмӑлӑм пур. И. Я. Яковлев пуҫласа янӑ тата ҫур ӗмӗр хушши йӗркелесе пынӑ шкул Сӗве шывӗ хӗрринче ларать. Шкулта тӗп классем виҫҫӗччӗ тата пӗр приготовительнӑй класс пурччӗ. Пӗрремӗш класа икӗ класлӑ училищӗрен вӗренсе тухнисене илетчӗҫ, кашни класӗнчех икшер ҫул вӗренмеллеччӗ. Вӗренекенсене апат ҫитеретчӗҫ, выртмалли хатӗрсем паратчӗҫ, эрнере пӗрре мунчара ҫӑвӑнтаратчӗҫ.

Экзамен лайӑх тытнисем хысна шучӗпе, начар тытнисем хӑйсен шучӗпе вӗреннӗ.

Эпӗ пырса кӗнӗ вӑхӑтра шкул хӑйӗн вырӑнӗпе те, ҫурт-йӗрӗсемпе те чылаях сарӑлса ҫитнӗччӗ. Унӑн килкартийӗ виҫӗ гектара яхӑнччӗ, йӗри-тавра йывӑҫ хӳме тытса тухнӑччӗ. Килкартинче ик-виҫ хутлӑ тӑватӑ ҫурт ларатчӗ, тӗрлӗ хуралтӑсем, учительсем пурӑнмалли хваттерсем тата сад пахчипе аллейӑсем пурччӗ. Тӗттӗм ялсенчен чи малтан килсе кӗрекен ачасем кӑна мар, Чӗмпӗр хулинчи халӑх та чӑваш шкулӗ ҫине тӗлӗнерех пӑхатчӗ. Ҫакӑ вӗренӳ комбиначӗ пек сӑнарлӑ шкул

Иван Яковлевич ырми-канми ĕçленине пула пуçланса кайнă та, патша тарçисем епле кăна ура хурсан та, çулсерен аслăланса пынă. Иван Яковлевич нумай калаçма юратман, пакăлтатакан çынсене ырламан сăпай çынччĕ, шкул епле акăш-макăш йывăрлăхсенче ÿссе пыни çинчен калаçмастчĕ.

Шкулта арçын ачасем те, хĕрачасем те вĕреннĕ. Арçын ачасем вĕреннине "Учительская школа" тенĕ, хĕрачасем вĕреннине „Женские педагогические курсы" тенĕ. Шкул çумĕнчех пуçламăш шкул пулнă. Унта аслă курсрисем вĕрентнĕ, учителе тухма практика ирттернĕ. Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ учительсен семинарипе пĕр тан шутланнă, анчах вĕренсе тухнисем пĕлÿ енчен семинарире вĕреннисенчен чылай малта тăнă. Эпĕ Чĕмпĕр шкулĕнче кашни курсрах, çаплах приготовительнăй курсра та, икшер çул вĕреннĕ, тенĕччĕ. Çак йăла питĕ ăнăçуллă та ăслă форма пулса тăнă, мĕншĕн тесен, пĕр çулхи программăна икĕ çул хушши вĕренни пĕлÿ енчен те, хăйсене тыткалама пĕлес енчен те тĕреклĕ çынсене кăларнă, чи малтанах чăваш ачисене вырăс чĕлхине хăйсен тăван чĕлхи пекех ăста пĕлме май панă. (Сăмах май каласа иртес килет: чăваш ачисем, хăйсем хушшинче куллен-кунах шакăлтатса калаçса, вырăс чĕлхине тĕрĕс-тĕкеллĕн вĕренччĕр тесе, Яковлев вырăс ачисене те шкула вĕренме илетчĕ).

Яковлевăн педагогикăлла системи тăрăх ялти учитель халăх хушшинче вĕрентÿ пирки кăна мар, ытти ĕçсене те пĕлсе тăракан ырă çын пулмалла пулнă. Тырă-пулă акса ÿстересси, выльăх-чĕрлĕх пăхасси, пахча çимĕç лартса тăвасси, сад ĕрчетесси, хурт-хăмăр усрасси тата ытти ялти хуçалăхри ĕçсене вĕренесси ачасен пăрăнса иртмелле мар тивĕçлĕхĕ пулса тăратчĕ. Чĕмпĕртен 12 çухрăмра шкул ферми пурччĕ. Çак фермăна тытса усрани, унта вĕренекенсене ĕçлеттерни шкулăн хуçалăхне типтерлĕ тытса пыма пысăк пулăшу паратчĕ. Унта ÿстернĕ çĕрулми, купăста, хăяр, помидор, тырă тата ытти çимĕçсем ачасен столовăйне каятчĕç, çулталăка ытлашшипех çитсе пыратчĕç. Ферма пурри шкулта вĕренекенсен шутне икĕ хут таранах ÿстерме май паратчĕ, çапла вара, пĕр ача вĕренсе тухмалла пулсан, çăннипе икĕ çын вĕренсе тухатчĕç, чăваш халăхĕн куçне уçса, ăна тĕнчене кăтартас çулпа уттарас, вырăс-

сен прогрессивлӑ культурин тӗшшине чӑваш ҫӗрне акас ӗҫ икӗ хут ӳсетчӗ.

Чӗмпӗрти шкул чӑваш халӑхӗпе питӗ таччӑн ҫыхӑнса тӑнӑ. Хулана килекен чӑвашсем яланах хваттере шкул ҫуртне вырнаҫатчӗҫ, Иван Яковлевич патне кӗрсе е ӑна тӗл пулса, унпа канашлатчӗҫ. Вӗсене шкул столовӑйӗнче укҫасӑрах апат ҫитеретчӗҫ. Пасар кунӗ вара ҫывӑхри Пухтелпе Пӑва таврашӗнчен килнӗ лавсем шкул килкартинче иртсе ҫӳремелле мар тулса ларатчӗҫ.

Чи малтанхи ҫулсенче те Константин Иванова эпӗ куллен тенӗ пекех куркаланӑ, хутран-ситрен калаҫкаланӑ, анчах, ваттисем калашле, ӑна „чӗрне хури таранах" пӗлмен. Вӑл йӑваш сӑнарлӑ, кӳлепи енчен имшеркке ачаччӗ, вӑрах чирлесе ӳснӗ пек туйӑнатчӗ. Питҫӑмартийӗсем типшӗм, хура куҫӗсем хӗсӗкрех те тарӑн. Вӑл ҫухаллӑ кӗпепе ҫӳретчӗ, ҫийӗнче ҫитсӑран ҫӗленӗ сӑхман пек тум (ӑна Пушкӑрт енчи чӑвашсем кӑна тӑхӑнаҫҫӗ, хӑйсем „йӗлен" теҫҫӗ), уринче сӑран атӑ. Юлташӗсен вӑйӑисене, ашкӑннӑ ҫӗре вӑл ытла хутшӑнмастчӗ, анчах та юлташӗсенчен ютшӑнмастчӗ, кирек хӑҫан та кама та пулин пулӑшас кӑмӑлӗ пурччӗ.

Вӑл картинӑсем ӳкерме юрататчӗ, унӑн ӳкерчӗкӗсем ҫине пӑхсан, вӗсене вунвиҫӗ ҫулхи ача ӳкернӗ теме ҫукчӗ. Унӑн картинисенче профессионал-художник ӑсталӑхӗ сисӗнетчӗ. Приготовительнӑй класӑн программинче рисовани предмечӗ пулман пирки Константин шкулти художник мастерскойне ҫӳретчӗ. Ун чухне Николай Федорович Некрасов, художество академинчен вӗренсе тухнӑскер, вӗрентетчӗ. Вӑл сарӑ сухаллӑ лутрарах кӗлеткеллӗ, 30—35 ҫулсем хушшинчи ҫынччӗ. Ботинка пуҫӗсем унӑн каҫӑрӑлса тӑратчӗҫ, тирпейсӗр тӑхӑнса янӑ ула-чӑла пиншакӗ ӑна темле циркач пек кӑтартатчӗ. Пӗр-пӗр картина ҫырма тытӑнсан, вӑл апат ҫиме те манса каятчӗ, мастерскойӗнчен тухма пӗлмесӗр ӗҫлетчӗ. Хӑйне вӑл вӗренекенсем умӗнче лайӑх тытатчӗ. Пирӗн класра художествӑна 4—5 ача кӑна юрататчӗҫ, ыттисем рисовани урокӗсенче сочиненисем ҫыратчӗҫ. Хӑшпӗр чухне, Некрасовӑн урокӗ пуҫлансан, класра ачасем пулмастчӗҫ, вара Николай Федорович пире коридорсенче, ҫывӑрмалли пӳлӗмсенче шыраса ҫӳретчӗ.

— Господа, класа пуҫтарӑнӑр! —тетчӗ вӑл пире тархасласа,—картинӑсем тӑвас килмест пулсан, кирек мӗнле урӑх ӗҫсем тӑвӑр. Класа никам та пымасан, е сахал

пуçтарăнсан, ман Иван Яковлевича мĕн калас? Мана та, сире те лайăх мар,—тетчĕ.

Иванов мастерскойне час-часах пыратчĕ; вăл куçĕсене кăшт хĕссе, нимĕн чĕнмесĕр пĕр-пĕр картина çине пăхса тăни халĕ те ман куç умĕнчех. Мастерскойне çӳрекен ачана Некрасов асăрхаса илнĕ, унпа калаçкаласа, вăл ăçталла туртăннине сиссе, ăна кăтартусем пама тытăннă. Пыра-киле художник мастерскойĕнче Ивановăн картинисем те курăна пуçларĕç. Вĕсене япаласем чĕркемелли хут çине кăмрăкпа ӳкернĕччĕ. Иванов ун чухне поэзипе интересленни мана паллă марччĕ. Çав вăхăтра вăл вырăс чĕлхине кирлĕ таран вĕренсе çитеймен, лайăх ăнланса вулама пултарайман, çавăнпа литература çулĕ çине тăрайман пулĕ, тесе шутлатăп эпĕ.

1905 çулти кĕркунне Иванов пĕрремĕш класа куçрĕ. Революци хумĕсем Чĕмпĕр шкулне те килсе кĕчĕç, иккĕмĕшпе виççĕмĕш классенче вĕренекенсем пăлханма тытăнчĕç, хăйсем демократиллĕ шухăшсене тытсах, хĕллехи каникула кайрĕç.

Эпĕ шкула 1907 çулти февраль уйăхĕнче таврăнтăм. Пĕрремĕш класрисем пăлханма тытăннă. Нумаях та вăхăт иртмерĕ, унта вĕренекенсене пурне те шкултан хăваласа кăларма хушакан хаяр хут Хусантан килсе çитрĕ.

Пĕрремĕш класра вĕренекенсен кӳренĕвĕ Д. И. Кочуров учительтен пуçланса кайнă. Кочуров чăваш ачисене юратмастчĕ, вĕсем вырăсла калаçнинчен те тăрăхласа кулатчĕ, хăшпĕрисене, чипер вĕренекеннисене те, юриех отметкăсем чакарса лартатчĕ.

Шовинистла йĕрĕнсе кулни, чăваш ачисене выльăх вырăнне хурса пăхни вĕсене тарăхтарса çитернĕ, çавăнпа та пĕрремĕш класра вĕренекенсем Кочурова шкултан кăларса яма ыйтса шкул директорне петици панă. Хусанти вĕренӳ округĕ чăваш шкулĕнче сепаратизм шăрши вăйлă, тесе айăп туртса кăларнă, шкула епле те пулин хупса лартас тесе сăлтав хыççăн сăлтав тупма тăрăшнă, çавăнпа Иван Яковлевич, вĕренекенсем тĕрĕс çырнине ăнлансан та, Кочурова вырăнтан сирпĕтме пултарайман. Хусанти вĕренӳ огругĕ хушнă тăрăх, пĕрремĕш класра вĕренекенсене пурне те шкултан хăваласа кăларнă, кашнинех урăх çĕре вĕренме кĕме права çукки çинчен кăтартса хут панă.

„Нарспи“
К. В. Иванов ӳкерчӗкӗ

Константин Васильевич ҫуркуннепе ҫулла хӑй ҫуралнӑ ялӗнче пурӑннӑ, епле те пулин вӗренес тесе, Бирскпа Благовещенск хулисене кайса ҫӳренӗ, анчах „забасговщик“ тени унӑн вӗренӳ ҫулне пӗтӗмпех касса татнӑ. Вара Иванов, Чӗмпӗре таврӑнма ирӗк ыйтса, Иван Яковлевич патне ҫыру хыҫҫӑн ҫыру ҫырнӑ. Вӑл хӑй тӗллӗн вӗренсе учитель ятне илме экзамен пама ӗмӗтленнӗ. Талантлӑ ҫамрӑк ҫыннӑн вӑйне Иван Яковлевич ӑнланнӑ, ҫавӑнпа ӑна хӑйӗн куҫӗ умӗнчен ҫухатасшӑн пулман.

К. В. Иванов 1907 ҫулти кӗркунне Чӗмпӗре килчӗ. Ӑна пӗр пӗчӗк пӳлӗм панӑччӗ, вӑл шкулта ачасемпе пӗрле столовӑйра апатланатчӗ. Вӑл турӑ ҫинчен калакан чӑвашла тухакан кӗнекесен корректурине тӳрлететчӗ. Константин Васильевич ҫав вӑхӑтрах Лермонтов сӑввисене куҫарнӑ, хӑйӗн оригиналлӑ произведенийӗсене те ҫырнӑ; ҫӗрле, юлташӗсем ҫывӑрнӑ вӑхӑтра, ҫырнӑ, хӑйӗн шухӑшӗсем ҫинчен никама та шарламан. Ҫавӑнпа эпир вӑл „Нарспи“ поэмине ҫырнине те сисмен. Ҫӗрле вӑл учителе тухма экзамена тӑрӑшса хатӗрленет пулӗ тесе шутлаттӑмӑр.

Иванов хӑйӗн поэмине чи малтан Иван Яковлевича вуласа кӑтартнӑ, лешӗ вара ача пек хӗпӗртесе кайнӑ, Констангин Васильевича ыталаса илсе чуптунӑ, тетчӗҫ. Поэма Иван Яковлевича ӑшчикӗ енчен те, форми енчен те савӑнтарнӑ. Унччен чӑвашсенчен никам та ҫакӑн пек хӑватлӑ янраса тӑракан сӑвӑллӑ йӗркесемпе ҫырман, чӑваш чӗлхи литература чӗлхи пуласси не

шанман çынсем те пулнă. Акă 17—18 çулхи ача, чăваш чĕлхин законĕсене тĕпчесе, питĕ те килĕшӳллĕ форма шыраса тупнă.

Çакна лайăх астăватăп: хăйĕн савăнăçне вĕренекенсене каласа парас тесе, Иван Яковлевич уроксем пĕтнĕ хыççăн пирĕн класа пырса кĕчĕ. Ăна курсанах, эпир унăн васкав уттинче темле савăнăç пуррине сисрĕмĕр, ура çине тăрса пуç тайма та ĕлкĕреймерĕмĕр, вăл калаçма та тытăнчĕ. Унăн сăмахĕсене эпĕ халĕ пурне те йĕркипе астăваймастăп, шухăшĕ çапларах пулчĕ:

„Нарспи тĕлĕкĕ“
К. В. Иванов ӳкерчĕкĕ

— Чăваш халăхĕ те илемлĕ литература туянĕ. Чăваш чĕлхипе сăвăсем çырма май çук тени—суя, анкă-минкĕ сăмах. Акă шкулта, этак-так, забастовщик Иванов пурăнать. Пĕлетĕр-и, вăл мĕн тунă? Поэма çырнă! Сăвăласа çырнă! Сăвăсем вара пит майлашнă, хитре илтĕнеççĕ. Пушкинăн „Евгений Онегин“ поэми евĕрлĕ. Ыран уроксем пĕтсен, вăл сире хăйех вуласа парĕ.

Тепĕр кунне, чăнах та, уроксем пĕтсен, кăнтăрлахи апат çинĕ хыççăн пирĕн пата Иванов килчĕ. Вăл мĕншĕн килнине эпир малтанах пĕлсе пурте класра вырнаçса лартăмăр, шăп пултăмăр. Константин Васильевич поэмине вулама тытăнчĕ. Малтан вăл хăюсăртарах, ерипен, каярахпа хăйса çитсе, хавасланса вулама пуçларĕ. Эпир унăн поэмине юрă итленĕ пек итлесе лартăмăр. Акă вăл вуласа пĕтерчĕ. Кăшт куçĕсене хĕссе кулнă пек пулчĕ. Эпир вырăнтан сиксе тăтăмăр та ăна „урра“ тесе çĕклеме тытăнтăмăр. Çавăнтах вăл поэмăна пирĕн пата хăварма тархасларăмăр, пирĕн ăна татах та вулас килет, анчах алçырăвĕ пĕрре кăна пулнă пирки Константин Васильевич хăвармарĕ. Пĕр ик-виç эрне

хушши Чӗмпӗрти шкулти ачасен шухӑшӗ „Нарспи“ поэма тавраш̆енче пулчӗ. Пурте тенӗ пекех ҫырма тытӑнчӗҫ, каҫсерен класс пӳлӗмне пухӑнса, хӑйсем ҫырнӑ сӑввисене вула-вула параҫҫӗ.

Хӑйӗн малтанхи поэми ӑнӑҫлӑ пулнипе хавасланса, К. В. Иванов татах произведенисем ҫырнӑ, ҫав хушӑрах Лермонтовӑн сӑввисене чӑвашла куҫарма тытӑннӑ. 1908 ҫул К. В. Ивановӑн кӗске ӗмӗрӗнче чи паха та паллӑ ҫул пулнӑ, чӑваш халӑхне хӑварнӑ произведенисене пурне те ҫав ҫул ҫырнӑ.

Ивановӑн „Нарспи“ поэмипе виҫӗ юмахне Иван Яковлевич хӑвӑртрах пичетлесе кӑларма тӑрӑшнӑ, анчах патша цензури чӑвашла оригиналлӑ кӗнекене пичетлеме ирӗк паман; чӑвашла тӗн кӗнекисем кӑларма кӑна май пулнӑ. Иван Яковлевич вара чее меслет тупнӑ, чӑваш халапӗсемпе юмахӗсене пухса пичетлесе кӑларма патша цензуринчен ирӗк илнӗ те Иванов ҫырнисене „Сказки и предания чуваш“[1] ятлӑ кӗнекере кӑларнӑ. Унта Федоровӑн темиҫе ҫул хушши ҫут тӗнче курман „Арҫури“ халапӗ те тухнӑ. Вӑл тапхӑрта чӑваш халӑхӗ хушшинче хут пӗлекенсем питӗ сайра кӑна пулнӑ пулин те, ҫак кӗнеке часах сарӑлнӑ, шкулсенче алӑран каймичи юратнӑ кӗнеке пулса тӑнӑ, произведенисене, уйрӑммӑнах „Нарспи“ поэмӑна улахсенче, хурал пӳрчӗсенче вулама пуҫланӑ.

К. В. Иванов хӑйӗн вилӗмсӗр поэмишӗн тата халапӗсемшӗн мӗн чухлӗ гонорар илнӗ-ха? Иван Яковлевич ӑна пусмаран (сукноран) пӗр сӑхман тата пӗр шӑлавар ҫӗлетсе панӑ. Пӗтӗм ҫав икӗ япала ун чухнехи хакпа 10 тенкӗрен ытла тӑман.

„Нарспи“ поэмӑпа ытти халапӗсем пичетленсе тухнӑ хыҫҫӑн, К. В. Иванов тата ытти произведенисем ҫырма тытӑннӑ. Пысӑк ӗмӗтпе пуҫланӑ ӗҫсем питех те ерипен пынӑ, ҫырсан та, вӗсем пичетленсе тухасса шанчӑк пулманни поэтӑн кӑмӑлне хуҫнӑ пулас. Ҫавӑнпа та ӗнтӗ юлашки ҫулсенче Константин Васильевич художествӑнне нумайрах туртӑнатчӗ, ӳкерме вӗренетчӗ, художество академине кӗресшӗн ҫунатчӗ.

— Мӗншӗн ҫырмастӑр?—тесе эпӗ темиҫе хутчен те ыйтнӑ унран.

---

[1] *„Сказки и предания чуваш“* (Чӑваш халапӗсемпе юмахӗсем) 1908 ҫулта пичетленсе тухнӑ. Ҫак кӗнекере К. В. Ивановӑн „Нарспи“ поэми чи пуҫласа пичетленнӗ.

— Çырсан та, сĕтел çинчен лерелле каймĕç,— тетчĕ вăл; унăн кăмăлĕ те сăнпичĕ те хурлăхлăччĕ.

Хăрушă вăхăтра, хура реакци алхасса, урса кайнă çулсенче пирĕн поэтăн сывлăхĕ начарлансах пычĕ.

Эпĕ Константин Васильевичпа 1909 çулта çывăх туслашрăм. Вăл çул эпĕ Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнчен вĕренсе тухса учитель ятне илтĕм. Пĕр вăхăта вĕрентме вырăн тупăниччен эпĕ шкул архивĕнче ĕçлеме юлтăм. Иван Яковлевич çемйи ывăлĕ патне кайнăччĕ, хăй вăл пĕчченех пурăнатчĕ. Вăл Ивановпа иксĕмĕре хăй хваттерне вырнаçтарчĕ, апат та ун патĕнчех çиеттĕмĕр. Кашни кун ирхине Иван Яковлевич пире апат-çимĕç илме пасара илсе каятчĕ. „Пурăнма вĕрентĕп“, тетчĕ вăл пире; апат-çимĕçсене йӳнĕрех илес тесе, усламçăсемпе темĕн пек тавлашатчĕ. Эпир ун çумĕнче хĕрелсе кайичченех намăсланса тăраттăмăр. Иван Яковлевич çапла тавлашни раснах Иванов кăмăлне каймастчĕ. Пасартан таврăнсан, ирхи апат çиетпĕр, унтан кашни хăйĕн ĕçне тытăнатчĕ. Каçхине, çывăрас умĕн, эпир Иван Яковлевича вăл çывăракан пӳлĕме кайса, ыйхă умĕн хаçат-журналсем, кĕнекесем вуласа параттăмăр.

Иван Яковлевич пире туртма хушмастчĕ. Пĕрре, çĕрле, Иван Яковлевич патĕнчен таврăнсан, эпир Ивановпа калаçкаласа пирус туртса выртатпăр. Сисмен те, пирĕн пата Иван Яковлевич пынă кĕнĕ. Эпир чĕлĕм туртнине курсан вăл темĕн пек çиленсе кайрĕ, пире тем те пĕр каласа вăрçма пуçларĕ, пирĕн пирус пач-

„Тăхтаман“
К. В. Иванов ӳкерчĕкĕ

кисене туртса илчĕ те çавăнтах лӳчĕркесе пăрахрĕ. Пирĕн тепĕр кунччен туртмасăрах пурăнмалла пулчĕ.

Константин Васильевич пушă чухне картинăсем ӳкеретчĕ, литература тĕлĕшпе ĕçленине эпĕ сайра хутра çеç курнă, вуласса вара нумай вулатчĕ, пуринчен ытла вырăс литературин классикĕсен произведенийĕсене вулатчĕ. Мĕншĕн çырман? Ку ыйтăва парсан, Константин Васильевич яланах:

— Вăхăт çитĕ,—тетчĕ.

Ун чухне чăвашла çырнисене пичетлесе кăларма май çукчĕ, патша тарçисем, Чĕмпĕрти чăваш шкулне хупас тесе, теменле меслетсем те шухăшласа кăларатчĕç, хаçатсенче те акăш-макăш урса кайса çухăратчĕç. Константин Васильевич пăнтăхса çитнĕ пусмăр тĕнчи çурăлса каясса, хĕвеллĕ пурнăç килессе, чăваш чĕлхи ирĕккĕн янрама пуçласса шаннă пулмалла.

Константин Васильевич хăватлăн пулса иртекен япаласене, пуринчен ытла пушар курма юрататчĕ. Пĕрре, çĕрле, хула варринче пысăк пушар тухнă. Константин Васильевич мана вăратрĕ те, эпир пушар курма чупрăмăр. Пĕр купцан пысăк çурчĕ çунма пуçланă иккен. Çулăмĕ темĕн пек йăлкăшать. Константин Васильевич купцан çунакан çурчĕ çине хĕпĕртесе, савăнса пăхса тăрать. Пысăк çуртсем çине—губернатор çурчĕ, губернски присутстви çурчĕ тата магазинсем çине аллипе кăтартса:—Ай-ай, çаксем тивсе кайсан пит те аван пулĕччĕ, çавсем çуннине манăн курасчĕ,—терĕ вăл. Эпĕ унăн çав сăмахĕсен пĕлтерĕшне ун чухне ăнланса илеймерĕм, вăл ахаль кăна пушар курасшăн пулĕ, тесе ăнлантăм. Халĕ тин, унăн ĕлĕкхи саманара пичетленме пултарайман сăввисене вуланă хыççăн çеç, ăнланса илтĕм: вăл губернаторсен, купцасен тата ытти харампырсен влаçĕ кĕлленсе саланасса ĕмĕтленнĕ иккен.

Константин Васильевич музыкăна „тиркени“ мана тĕлĕнтеретчĕ. Юрлама вăл пĕлместчĕ, мĕншĕн тесен унăн хăлхи витĕрех илтсе каймастчĕ. Музыка пирки хутран-ситрен Федор Павловичпа тавлашатчĕç, ăна тĕрлĕ сăмахсемпе тăрăхлатчĕ. Чĕмпĕрте пурăннă чухне поэт музыка тесен мĕншĕн тарăхнине ăнланса илтĕм. Ивановпа Павлов юнашар пӳлĕмсенче пурăнатчĕç; Федор Павлович, кунĕн-çĕрĕн сĕрме купăс калама юратаканскер, Константин Васильевича ĕçлеме чăрмантарнă мĕн.

Халĕ, нумай çулсем иртсе кайсан, курни-илтнисене, Чĕмпĕрте вĕреннĕ тата поэта тĕл пулнă çынсем каласа панисене куç умне ўкеретĕн те, Константин Васильевич чăваш халăх юррисене, классикла вырăс музыкине чунтан юратни тухса тăрать. Вăл Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн сцени çинче лартнă Глинкăн „Иван Сусанин“ опери валли декораци те тунă иккен.

1909 çулхи кĕркунне эпĕ Чĕмпĕртен тухса кайрăм. Ивановпа эпир пĕр-пĕрин патне сайра хутра çырусем ярса тăраттăмăр, анчах ун çырăвĕсене эпĕ куçса çўренĕ май пĕтĕмпех çухатса пĕтертĕм. К. В. Иванов хăйĕн литература ĕçĕсем çинчен пачах та çырмастчĕ. Унăн туртăмĕ—художество академине кĕресси пулнă, ун çинчен вăл çыркалатчĕ.

Иванова юлашки хут эпĕ 1912 çулта çулла тĕл пултăм. Вăл акă мĕн сăлтавпа пулчĕ. Эпĕ 1911—1912 çулсенче çĕнĕ чăваш букварĕ çырнăччĕ. Алçырăвĕсене Иван Яковлевич патне ятăм.

Букварь Иван Яковлевича кăмăла кайнă. Вăл мана букваре пичетлеме Чĕмпĕре чĕнчĕ. Иванов ун чухне Чĕмпĕрте пурăнатчĕ, букварь валли картинăсем тăвас ĕçе хапăл тусах йышăнчĕ. Çак букварĕн пĕрремĕш изданине пăхсан, Иванов мĕнле лайăх художник пулнине курма пулать. Хăйĕн юратнă поэчĕ Лермонтов пек, Константин Васильевич пысăк талантлă поэт кăна мар, талантлă художник та пулнă.

1912 çулта Иванов хăйĕн учителĕпе—Некрасов художникпа пит туслă пурăнатчĕ. Эпĕ те К. В. Ивановпа ун патне хăш чухне хăнана кайкалаттăм. Вĕсен иккĕшин те мĕнпур калаçăвĕ художество çинчен кăна пыратчĕ.

Кĕркуннеччен чăваш букварьне кăларма май пулмарĕ. Цензура питĕ чăрмантарчĕ. Пĕрне улăштарсан, цензура мĕн те пулин тата тепре тупатчĕ, çапла сăлтав хыççăн сăлтав купаланса пыратчĕ. Вара вĕренў çулĕ пуçланса кайнă пирки эпĕ Чĕмпĕртен тухса кайрăм. Букваре кăларма эпĕ Иванова каласа хăвартăм. Эпир унпа пит ăшшăн уйрăлтăмăр. Вăл мана асăнмалăх хăйĕн карточкине пачĕ, тўнтер енче хăйĕн аллипе „другу на память“ тесе çырчĕ. Çав карточка манăн халĕ те сĕтел çинчех ларать.

1948.

К. А. АПАНАСОВ[1]

К. В. ИВАНОВ КĂМĂЛĔ

Иванов ачасем хушшинче пуринчен те уйрăм тăратчĕ, кăшкăрашса ашкăнас çĕре вăл пĕрре те хутшăнмастчĕ, пĕрмаях пуçне чиксе çӳреме юрататчĕ. Kaçхи вĕренӳ пĕтнĕ хыççăн вĕсен пӳлĕмĕнче питĕрех те кăмăллă туйăнатчĕ: пурте выртса пĕтнĕ, анчах пĕрин те çывăрас кăмăл çук. Умлăн-хыçлăн, черечĕпе юмахсем яратчĕç. Хăш каç кам халапçă пулассине малтанах уйăрса хунăччĕ пулас. Эп хам курман, анчах Иванов пысăккисем çук чухне хăйĕн пеккисем хушшинче хăюллă тата çивчĕ чĕлхеллĕ тесе каланине илтнĕ.

Пĕчĕкçĕ çамрăк Иванов хăлха енчен хытăрахчĕ, хуллен каланине илтместчĕ, анчах музыкăна ытла та хытă юрататчĕ. Пирĕн шкулти ачасен хорĕ юрланине итленĕ чух епле хумханулла пит-куçлă пăхкаласа тăнине астăватăп. Вăл кайран, çитĕнсе çитсен, купăс калама питĕ ăста пулнă тенине эпĕ Чĕмпĕр шкулĕнче вĕреннĕ çынсенчен илтнĕччĕ. Эпир пĕр енчисем пулнăран пирĕнпе вăл уççăнрах калаçатчĕ. Пĕрре эпир, вăл Чĕмпĕрте иккĕмĕш çул вĕреннĕ чухне хамăра аслă юлташсем вырăнне хурса, унăн тетрачĕсене пăхма тытăнтăмăр, вĕсем хушшинче чăвашла çырнă сăвăсем тупрăмăр. Кĕçтенттин çавăнтах хĕрелсе кайрĕ, вăтанчĕ; вĕсене вăл никама та кăтартмасăр вăрттăн çырнă иккен. Хăй сăвăсем çырни çинчен пĕлтерчĕ. Питĕрех те унăн куçĕсем тĕлĕнмеллеччĕ. Вĕсен тĕсне те, вĕсем епле çуннине те каласа пама сăмах çитмест. Вĕсем тарăн та йăвашчĕ, çав вăхăтрах шăтарас пекех пăхатчĕç.

1940.

[1] Вată учитель, халĕ Пушкăрт республикинче, Кăркăс Маяк районĕнче, Хурамал ялĕнче ĕçлет. Ку асаилĕве Ухсай Яккăвĕн „Константин Васильевич Иванов (биографиллĕ очерк)“ ятлă кĕнекинчен илнĕ. (Чăвашгосиздат, 1940 ç., 17 стр.)

С. Н. АЛЕКСЕЕВ

ПĔР ПАРТА ХУШШИНЧЕ

Чĕмпĕрти чăваш шкулне эпĕ 1905 çулхи кĕркунне пырса кĕтĕм. Ялта икĕ класлă шкултан вĕренсе тухнă пирки мана тӳрех пĕрремĕш класа илчĕç; конкурса таçтан та чăваш ачисем килсе тулнăччĕ, çавăнпа экзаменра чылаях тăрăшмалла пулчĕ.

Пире класа илсе кайрĕç. Унта икĕ енче партăсем лартса тухнă, кашни парта хушшине виçĕ çын ларма пултарать. Эпĕ вăта çĕре лартăм, манпа юнашар чăваш халăхĕн пулас чаплă поэчĕ Константин Васильевич Иванов ларчĕ. Вăл Чĕмпĕр шкулĕнче приготовительнăй класра икĕ çул вĕреннĕ, унччен ялти пуçламăш шкула кăна пĕтернĕ иккен.

Вĕренме кĕнисем чылайăшĕ çăпата сырнăччĕ, тăла сăхман тăхăннăччĕ. Константин çи-пуç енчен ыттисенчен уйрălса тăратчĕ: шăлаварпа атă, бобрикран çĕленĕ пиншакла пальто тăхăннăччĕ. Кăмăлĕпе вăл лăпкă та сăпай ачаччĕ, хăйне ыттисенчен уйăрса, ашкăнса е мухтанса тытмастчĕ, уроксене хатĕрлесе çитернĕ хыççăн пĕр-пĕр кĕтессе кĕрсе, хăй кăна пĕлекен кĕвве хуллен юрласа ларатчĕ, анчах эпĕ вăл çапла сăмахсем шыраса сăвăсем çырнине чылай вăхăт пĕлмен. Константин вырăс поэчĕсен произведенийĕсене куçарнине, хăй çырнине тата ӳкерме ăсталанса пынине каярахпа кăна туйса илтĕм, мĕншĕн тесен вăл, е хăйĕнчен куласран хăраса, е вăтаннипе, хăй кăмăлланă ĕçсене питĕ вăрттăн тăватчĕ, шавласа çӳреме юратмастчĕ.

Константин хăйĕн ĕçĕсене чи çывăх тусĕсене, хăйĕн пек шавлама юратманнисене кăна кăтарткаланă. Эпĕ унпа икĕ çул хушши пĕр парта хушшинче лартăм; унтанпа хĕрĕх çул иртсе кайрĕ, пулса-иртнисене пайтах манса кайнă ĕнтĕ.

Константинăн темиçе хулăн тетрадь пурччĕ, вĕсене

хăй сăвăласа çырнă тата вырăсларан куçарнă япаласемпе тултарнăччĕ, унта кăранташпа ӳкернисем те пурччĕ.

Вăл ача чухне „Рейнеке Лис“ [1] е çавăн пек илтĕнекен ятлă вырăсла кĕнекене сăвăлла куçарнине эпĕ астăватăп, халĕ ячĕ ун пекех тесе ĕнентерсех калама пултараймастăм, анчах „лиса“ е „лис“ сăмах пурри пирки пĕрре те иккĕленместĕп. Эпĕ кайран, епле кăна шырасан та, çавăн пек ятлă вырăсла кĕнеке кураймарăм. Куçарни Константинăн хăйĕн кăмăлне те каятчĕ, эпĕ вара сăввисем питĕ янранине каçса кайсах итлеттĕм. Ача чухне çырнисем 1906 çулта, хăйсен килĕнче вут тухсан, çунса кайнă. Кĕркунне, çуллахи каникултан таврăнсан, Константин тетрачĕсемпе ӳкерчĕкĕсем çунса кайни çинчен кулянса каласа пачĕ.

— Килти çурт-йĕре мар, тетрадьсемпе ӳкерчĕксене хĕрхенетĕп,—тетчĕ вăл.

Пирĕнпе вĕреннĕ чухне художество енчен те, поэзи енчен те, сăмах янăравĕпе сăр илемĕн вăйĕпе тĕрекне пĕр пекех пултаруллă кăтартатчĕ, малашне вăл пысăк пултаруллă поэтпа пĕрлех хăватлă художник пуласси вунултă çулхи ачарах курăнса тăратчĕ.

Рисовани урокне художество академинчен вĕренсе тухнă Некрасов преподаватель вĕрентетчĕ. Акă вăл темĕнле фигура илсе килчĕ те кафедра (çӳлĕ сĕтел) çине лартрĕ. Кам ăçта, хăш енчен мĕнле курать, çавăн пек ӳкермелле, тесе ăнлантарать пире Некрасов. Эпир япала чĕркемелли сарă хут çине кăмрăкпа ӳкереттĕмĕр. Юриех çунтарса тунă кăмрăк татăккисем 15—20 сантиметра яхăн тăршшĕччĕ. Некрасов класра каллĕ-маллĕ уткаласа çӳрет, хутран-ситрен ачасем патне пырса тăрать, ăнлантарать, тӳрлеткелет. Акă пирĕн парта патне пычĕ, Константин хутне илсе пăхрĕ, шухăша кайнă пичĕсем çинче хăйĕн ученикне мухтанине кăтартакан сăн выляса илчĕ. Константин чăнах та ăста художник пек тĕрĕс ӳкернĕ.

Константин художество ĕçне ятарласах ниçта та вĕренмен, сăрсене хут çине епле хурассине, икĕ е темиçе сăра хутшăнтарса ярассине те кăшт кăна пĕлкеленĕ. Хăй пĕлнĕ пек чухласа, вăл Иван Яковлевич портретне пир çине çуллă сăрсемпе ӳкернĕччĕ. Пĕр вăхăтрах-и е

---

[1] *„Рейнеке Лис“*—нимĕç поэчĕ Иоганн-Вольфанг Гёте (1749—1832) çырнă сатирăллă поэма.

маларах, Некрасов та пир ҫинче ӳкернĕччĕ. Ҫак икĕ ĕҫе пĕр-пĕринпе танлаштарса пăхсан, пире Константин ӳкерни Некрасовăннипе пĕр танах туйăнатчĕ. Эпир ăна Константин хамăрпа вĕреннĕ пирки савăнса ӳстерсе хак панă пулĕ, анчах портречĕ Иван Яковлевич сăнне питĕ те тĕрĕс кăтартса паратчĕ, искусствăна ăнланакан ҫынсем те Иванов ҫырнă портрета мухтатчĕҫ, ҫамрăк ачаран малашне пысăк художник пулассине шанса калаҫатчĕҫ.

Парта ҫинче хатĕр таса хут выртать пулсан, вăл пĕр-пĕр кулса е анасласа ларакан ачан сăнне хăвăрт кăна ӳкерсе илетчĕ, тӳрлеткелетчĕ, кайран вара кăтартатчĕ: „Санăн сăну кулнă чухне ҫакăн пек“, тетчĕ. Чăннипех те ăста ӳкеретчĕ, ҫын портречĕ питĕ тĕрĕс пулатчĕ.

Эпир сочиненисене уйăхра икĕ хут ҫыраттăмăр. Вырăс чĕлхине вĕрентекен Кочуров тема парса хуратчĕ, пĕр-икĕ эрне хушшинче эпир ҫырса хатĕрлеттĕмĕр. Преподаватель хăй пăхса тухнă тетрадьсене валеҫсе тухатчĕ те киле ҫĕнĕ тема парса яратчĕ.

Сочиненисене пама пĕр-икĕ кун тăрса юлсан, ученикcем каҫсерен хăйсен ĕҫĕсене тӳрлетме тытăнатчĕҫ, куҫарса ҫыратчĕҫ. Константин тусĕсем ĕҫленине курсан, парта хушшинче парта ҫине таянса шухăша кайса ларатчĕ, сочиненин планне туса ҫитерне хыҫҫăн вăл тӳрех тетрадь ҫине ҫырма тытăнатчĕ, турткаласа тепĕр хут куҫарса тăмастчĕ.

Константин сочиненийĕсем яланах „5 плюс“ хак илетчĕҫ, хыҫалта учитель тата уйрăм „минус“ лартатчĕ:—черновиксĕр тӳрех ҫырнă пирки, унăн сочиненийĕ питĕ лайăх пулсан та, тасах пулса ҫитейместчĕ.

Константин суякан ҫынсене тата камăн та пулин кăмăлне хуҫнине питĕ те юратмастчĕ, анчах вăл хăйĕн шухăшне каласа парас тесе, шавласа ҫӳреместчĕ.

Вырăс чĕлхипе вĕрентекен Кочуров тата историпе вĕрентекен Никифоров пуп учительсен советĕнче пĕрремĕш курсра вĕренекенсем ҫинчен темĕн те пĕр элеклесе калаҫнă. Ҫак хыпар пирĕн хăлхана та пырса кĕчĕ. Пиртен маларах вĕреннисем те, пирĕн класра вĕренекенсем те вĕсене ят панăччĕ: Кочурова питĕ те кăшкăрашма юратнине кура „извозчик“ тетчĕҫ, Никифорова— „мамай“ тетчĕҫ, мĕншĕн тесен вăл Мамай ҫинчен нумай каласа паратчĕ, хăйĕн сăнарĕ те Мамайăнни пекех пулса тухатчĕ.

Пĕрре вырăс чĕлхипе вĕрентнĕ чухне, Кочуров „*Закадычные друзья*“ тени ҫинче чарăнса тăчĕ, пире ăнлантарса пачĕ. Учительсен советĕнче Кочуровпа Никифоров пĕрремĕш класри ачасем ҫине тапăнса, вĕсене тиркесе калаҫнине Константин аса илнĕ пулас, вăл пĕррехинче доска ҫине каррикатура ӳкерсе хунăччĕ. Унта Кочуровпа Никифоров катка умĕнче ларатчĕҫ, аяла „*Извозчик и Мамай друзья закадычные*“, тесе ҫырса хунăччĕ.

Ҫак ӳкерчĕк ачасен кăмăлне кайрĕ. Урока Никифоров пуп килсе ҫитрĕ, каррикатурăна курчĕ, анчах хăйне ăнланманҫи пек тыткаларĕ, доскана тасатма хушрĕ.

Шкулти учениксем, уйрăмах пĕрремĕш класра вĕренекенсем, казармăри пек пурăнатчĕҫ, администраци хулана тухса ҫӳреме ирĕк памастчĕ, театра кайса курма юрамастчĕ.

Пĕррехинче хулара лайăх постановка пулмаллаччĕ, „Ревизор“ пек астăватăп. Пилĕк ача ҫак пьесăна курма вăрттăн тухса кайнă, вĕсем хушшинче Константин та пулнă. Большая Конная урама тухнă ҫĕрте ун чухне ҫурт таврашĕ ҫукчĕ, ҫӳлĕ йывăҫ хӳме кăначчĕ. Хулана вăрттăн тухса ҫӳреме ачасем ун айне чавса пĕр пĕчĕк хушăк тунăччĕ, унтан хырăмпа шуса кăна тухма пулатчĕ.

Каҫхине, занятисем иртнĕ хыҫҫăн класа яланах дежурствăри учитель килетчĕ, каҫхи кĕлĕсене вулаттаратчĕ, вара кайса ҫывăрма ирĕк паратчĕ. Ку каҫхине дежурствăна пĕр пуп килнĕччĕ. Вăл пире пурне те шутласа тухрĕ те пилĕк ҫын ҫуккине пĕлчĕ.

— Мĕншĕн пурте мар?—терĕ вăл.

— Чирленĕ пулĕ,—терĕ тахăшĕ.

Пилĕк ҫын театра кайни ҫинчен пур учениксем те пĕлмен пулас. Эпир ҫывăрмалли пӳлĕмре хамăр туссене епле те пулин хӳтĕлесси ҫинчен канашларăмăр, ҫуккисен вырăнĕсене пальтосемпе пиншаксем хутăмăр та ҫиелтен одеялсемпе витсе тухрăмăр. Ҫынсем хăйсен пуҫĕсене одеялпа витсе ҫывăрнă пекех курăнать.

Пуп пӳлĕме килсе кĕрет, пăхса ҫӳрет те каллех тухса каять. Нумаях та вăхăт иртмест, вăл тепĕр хут килсе кĕрет, пĕр ача ăҫта выртнине ыйтать. Вăл ача чиркӳре ĕҫлекелетчĕ, пуп ăна ырана темĕнле ĕҫ парса хăварасшăн иккен. Вăл пĕрне пырса вăратма хăтланать, теприне, анчах пурте хытă ҫывăрнă пек мăкăртатса

кăна илеççĕ. Пуп çапла вăратса çӳрерĕ, пĕр койка çинче çын вырăнне пиншак выртнине курах кайрĕ те тĕлĕнчĕ, вара, паллах ĕнтĕ, Иван Яковлевич патне тӳрех вĕçтерчĕ.

Эпĕ йывăç хӳме патнелле тухрăм та шкулта ĕçлекенсемпе хуралçăсем ларнине курах кайрăм. Хăшĕ ухват, хăшĕ турчăка тытнă. Вĕсене яра кунах ĕçлесе ĕшеннĕ хыççăн ăшă вырăнсем çинчен тăратнă, çавăнпа вĕсем кӳренсе калаçаççĕ, вĕсене хулана вăрттăн тухса кайнă ачасене тĕл пулса палласа илме тăратнă иккен.

Эпĕ ачасене вăратрăм та хамăр юлташсене епле инкек кĕтни çинчен каласа патăм. Вĕсене епле те пулсан çăлса хăварас терĕмĕр.

Театра вăрттăн çӳресси пирĕн хушăра час-часах пулкалатчĕ, çавăнпа та эпир пирĕн туссем театртан хăçан, хăш сехетре килессине сиссе илтĕмĕр. Эпĕ Константинăн сарă пиншакне тăхăнтăм та йывăç хӳме патне кайса выртрăм. Чăнах та, кĕтнĕ пекех, пĕр вунă минутран пирĕн ачасем килчĕç.

Эпĕ вĕсене пĕтĕмпе каласа патăм, хам халех пӳлĕме кайрăм та пур ачасене те вăратрăм. Эпир коридора тухрăмăр, театртан килнисем пирĕнпе хутшăнса кайрĕç, сывăрма кĕчĕç. Çапла вара вĕсене никам та пĕлме пултараймарĕ.

1907 çулхи хĕлле типĕ тытмалли вăхăт килсе çитрĕ. Пире типĕ апат кăна пама тытăнчĕç, çимелли те питĕ начарланчĕ. Эпир администрацирен ирхине кулач пама ыйтасшăнччĕ. Пире ирхине апат çитермен пулмалла, питĕ касăлса выçăхнине астăватăп.

Кулач ыйтни çинчен ачасемпе калаçма Некрасов художнике хушнăччĕ. Вăл пире каçхине чиркĕве илсе кайрĕ, ӳкĕтлеме тытăнчĕ. „Çăкăрпа кăна мар, турă каланă сăмахпа çын тутă", терĕ вăл евангели сăмахĕсене аса илсе.

Тепĕр кун доска çине „Этем çăкăрпа кăна мар, кулачпа тутă" тесе çырни сиксе тухать. Эпĕ ун чухне çак хаяр сăмахсене Константин çырнă пуль тесе шутларăм, халĕ те çав шухăш ман пуçран каймасть.

Кочуров питĕ усал çынччĕ, чăваш ачисене юратмастчĕ, хăшне-пĕрне юриех начар отметкăсем лартса паратчĕ. Пĕрремĕш класрисем пурте ăна кураймастчĕç, çавăнпа эпир ăна ĕçрен кăларма ыйтас шухăш тытрăмăр. Администраци пирĕнпе килĕшмесен, Кочурова

хирӗç бойкот тытас, анчах ытти преподавательсемпе ӗлӗкхи пекех вӗренес, терӗмӗр.

Кочуров урока пырса кӗрсен, вӗренекенсем пурте команда панӑ чухнехи пекех тӑчӗç те кӗпӗрленсе тухса кайрӗç. Кочуров пушӑ класра пӗчченех тӑрса юлчӗ. Эпир çакӑн пек хирӗç тӑни ахалех иртсе кайма пултарайман, малтан пӗр преподавателе ӗçрен кӑларма кӑна ыйтнӑ пулсан, малашне политикӑллӑ ыйтусем кӑларса тӑратрӑмӑр. Хамӑрӑн пурнӑçа та лайӑхлатас ыйтӑва сиктерсе хӑвармарӑмӑр,—çаксене пурне те кӑтартса петици çыртӑмӑр, ӑна вара сасӑласа вӑрттӑн йышӑнтӑмӑр, петицине йышӑнман хушӑрах уççӑнах забастовка пуçласа яма пурте хатӗр иккенне кӑтартрӑмӑр. Администрацине кам петици кайса парасси çинчен ыйту çӗкленчӗ. Ик-виç çын уйӑрса парсан, вӗсене, паллах ӗнтӗ, шкултан кӑларса сирпӗтеççӗ. Çавӑнпа петици пама пӗтӗм класпа кайрӑмӑр, малта пӳ енчен чи пӗчӗккисем тӑнӑччӗ.

Çакӑн хыççӑн нумай та вӑхӑт иртмерӗ, пӗрремӗш класа салатса ярас пирки Хусантан хут та килсе çитрӗ, 1907 çулти мартӑн 7-мӗшӗнче (çӗнӗ стильпе—20-мӗшӗнче) эпир хамӑрӑн килсене салантӑмӑр, анчах, çивӗчрех ачасене кӑларӗç те, ыттисене шкула каллех пухаççӗ пулӗ, тесе шутланӑччӗ.

Эпӗ нихӑш шкула та вӗренме кӗреймерӗм, мӗншӗн тесен каялла тавӑрса панӑ свидетельствӑсем çине çапла çырнӑччӗ: „Означенный в сем свидетельстве обучался в веренной мне школе с 1-сентября 1905 г. по 4 марта 1907 г. и уволен за подачу петиции и забастовку“. Çавӑн пек çырнӑ хутсене çулла пӗрремӗш класра вӗреннисене пурне те ярса панӑ, вӗсен умӗнче нимӗнле шкул алӑкӗ те уçӑлма пултарайман.

Иванов çав çулах кӗркунне Чӗмпӗре пынӑ, вӑл вӗренме мар, ӗçлеме, кӗнекесем куçарма килни çинчен мана çырса пӗлтерчӗ. Пысӑк талантлӑ поэт тепӗр çул хӑйӗн „Нарспи“ поэмипе юмахӗсене пичетлесе кӑларнӑ.

1948.

М. Д. ТРУБИНА

ТĂВАН ПОЭТА АСА ИЛНИСЕМ

1903 çулта эпĕ Чĕмпĕрти (халĕ Ульяновск) чăваш шкулне приготовительнăй класа вĕренме кĕнĕччĕ. Хамăрпа пĕрле вĕренекен ачасем хушшинче пĕр хура çӳçлĕ, илемлĕ сăн-питлĕ ача пурччĕ. Çав тери лăпкă, тӳлек ачаччĕ вăл. Калаçнă чух унăн питçăмартисем пăт путса çавраланатчĕç, сăмси тӳрĕччĕ, хура-хăмăр куçĕсем пысăк та илемлĕччĕ; хăш чух вăл вĕсемпе темĕн çинчен шухăша кайса салхуллăн пăхатчĕ. Константин Иванов теттĕмĕр эпир вăл ачана.

К. В. Иванов яланах тирпейлĕ тумланса çӳретчĕ. Хĕлле эпĕ ăна класра хура пустав костюмпа çӳренине астăватăп, çулла хура е кăвак сатин кĕпе тăхăнатчĕ, чĕн пиçиххи çыхатчĕ; уринче унăн яланах ялтăркка çутă кунчаллă атăччĕ.

К. В. Иванов питĕ лайăх вĕренетчĕ. Пуринчен ытла вăл сочиненисене ăста çыратчĕ. Пĕрре Роман Никифорович Идобаев ятлă учитель пире „Зимняя ночь в деревне" сочинени çырма пачĕ. Иванов çак сочинение çав тери ăста çырнă пулнă. Учитель пире унăн сочиненине чи лайăх ĕç тесе класра вуласа пачĕ. „Иванов çутçанталăка сăнама пĕлет, вăл ăна художествăллă меслетсемпе усă курса сăнлама пултарать, кĕнекесем нумай вуланипе вăл хăй чĕлхине пуянлатса пырать", терĕ вăл.

Чăн та, Иванов çав тери нумай кĕнеке вулатчĕ. Ирхине, урок пуçланиччен те, каçхи занятисенче те, хăш чухне перемена вăхăтĕнче те кĕнеке вуласах çӳретчĕ. Астăватăп, пĕрре, закон божий урокĕнчеччĕ-ха вăл, пуп пире иудей чиркĕвĕ çинчен каласа парать, каласа панă хушăрах, чиркӳ планне доска çине ӳкерет. Иванов пуçне чикнĕ те, пĕр хускалмасăр тенĕ пек, Кольцов сăввисене вуласа ларать.

— Мальчик в черной рубашке,—чĕнчĕ пуп Иванова,—что делаешь?

Иванов хĕрелсе кайса ура çине тăчĕ. Пуп Иванов патнелле пырать. Мĕн пулать-ши ĕнтĕ? тесе, пĕр сывламасăр пăхса ларатпăр эпир. Пуп пынă çĕре К. В. Иванов нимĕн те пулман пек, закон божий кĕнеки çине пăхса тăрать. Кольцов сăввисене пытарнă иккен. Хăйпе юнашар ларакан ача закон божий кĕнекине ун умне уçса хума та ĕлкĕрнĕ мĕн.

— А...—терĕ пуп,—по книге следишь.

Çапла вара пуп Иванов закон божий урокĕнче Кольцов сăввисене вуласа ларнине пĕлеймерĕ.

Пĕрре, хĕллехи каникула ярас умĕн-ха вăл, Идобаев учитель пирĕнтен кам мĕнле кĕнеке вулани çинчен ыйтса пĕлчĕ. Эпир каласа патăмăр.

— Сирĕн класра Иванов нумай вулать. Мĕнле кĕнекесем вулать-ши вăл?—ыйтрĕ Идобаев.

Иванов класра çукчĕ. Ивановпа юнашар ларакан ача партине уçса, Иванов вуланă кĕнекесен списокне кăтартрĕ.

Парта хупăлчи айне К. В. Иванов хут çыпăçтарса хунă пулнă, çав хут çине вăл хăй вуланă кĕнекесен ячĕсене çырса пынă мĕн. Пушкин, Лермонтов, Гоголь, Гĕте, Гейне, Жюль Верн, Майн Рид, Виктор Гюго тата ытти паллă писательсен ячĕсем те пурччĕ унта. Мĕн пурĕ 42 произведени вуланă. Çав произведенисенчен Жюль Вернăн „Дети капитана Гранта", Виктор Гюгон „Отверженные", Данилевскин „Девятый вал" самаях пысăк кĕнекесем.

— Пăт ытла кĕнеке вуланă Иванов,—хăюсăртараххăн шўтлерĕ пĕр ача.

— Иванов пултаруллă ача. Çаплах вĕренсен вăл университет скамйи çине ларатех,—терĕ Идобаев.

Çав каçа эпĕ нихăçан та манас çук. Ĕмĕрлĕхех асра вăл. Çав каçхине Идобаев пирĕнпе нумайччен калаçса ларчĕ. Кĕнеке вулани çынна питĕ пысăк усă пани çинчен, халăх сăвви-юррисене, юмахĕсене пухасси çинчен калаçрĕ. Идобаев халăх юррисемпе интересленет иккен, вăл вĕсене пухса пырать имĕш. Идобаев ытти учительсем пек марччĕ, питĕ кăмăллăччĕ, çавăнпа та юрататтăмăр эпир ăна. Ачасемпе çывăхчĕ вăл. К. В. Иванова час-часах хăй патне, хваттерне, чĕнетчĕ. Паллах, Идобаев Иванова халăх творчествипе интерес-

ленме, илемлӗ произведенисенче халӑх творчествипе усӑ курма вӗрентнӗ.

Малтанхи ҫул вӗреннӗ чухнех-ха вӑл, хӗллехи каникул иртсен, ачасем Иванов ҫинчен ҫапла кала пуҫларӗҫ: Иванов сӑвӑ ҫырнӑ. Вӑхӑтсӑр вилнӗ хӗр ҫинчен ҫырнӑ, тет. Хӗрӗ хӑйӗн хурӑнташех, тет. Сӑвви питӗ хитре вара. Ҫав тери хурлӑхлӑ, вуласан йӗрсе ярӑн, терӗҫ.

Ман вӑл сӑвва вуласа пӑхас килчӗ. Вӑл вӑхӑталла эпӗ хам та кӑштах сӑвӑсем ҫыркалаттӑм. Идобаев каланипе халӑх сӑввисене, юмахӗсене ҫырса илеттӗм.

Пӗрре Иванова эпӗ ҫӳлти хута хӑпармалли пусма ҫинче тӗл пултӑм. Вӑл аялалла анать, эпӗ—хӑпаратӑп.

— Иванов,—чарса тӑратрӑм эпӗ ӑна,—пар-ха мана хӑвӑн тӑван вилни ҫинчен ҫырнӑ сӑвва, вуласа пӑхам.

Иванов питҫӑмартисене пӑт путарса ҫавралатрӗ те, лӑш кулса пуҫне сулларӗ.

— Ҫук, памастӑп...

— Мӗншӗн?—тетӗп эпӗ.

— Ахалех...

Тек чарӑнса тӑмарӗ вара... Ҫӑмӑллӑн утса, тӑпарттӑпӑрт тутарса аялалла анса кайрӗ.

Ҫакӑн хыҫҫӑн эпӗ Иванов партине ухтарма шут тытрӑм. Чӑтма ҫук вулас килет-ҫке-ха манӑн ун сӑввине.

— Ирӗклӗн памасан, ирӗксӗр илӗп,—терӗм эпӗ, вӑрӑ-хурахсем ҫинчен ҫырнӑ произведенири геройсен сӑмахӗсене аса илсе.

Ку ӗҫ ҫӑварни эрнинче, шӑматкун пулчӗ. Эпир пурте каҫхи кӗлле, чиркӗве кайрӑмӑр. Кӗлӗ пуҫлансанах эпӗ наставница патне пытӑм. Хам, хумханатӑп пулин те, наставница умӗнче хама хам ҫирӗп тытма тӑрӑшатӑп.

— Ман пуҫ ыратать, чиркӳрен тухса кайма юрать-и?—ыйтатӑп эпӗ.

Наставница ман ҫине ҫавра куҫӗсене мӑчлаттарса пӑхса илчӗ, ку ӗнтӗ, каях тени пулчӗ. Эпӗ хӗрелсе кайнӑ питпе чиркӳрен тухрӑм, пусма тӑрӑх хӑпартӑм та хамӑр вӗренекен класа кӗтӗм. Класра шӑпах. Чиркӳре юрлани кӑшт ҫеҫ илтӗнет кунта. Пысӑк чӳречесенчен уйӑх ҫути йӑпшӑнса кӗрет. Кӗтесре шӑлне йӗрнӗ ҫын скелечӗ тӑрать, унӑн путӑк куҫӗсем хӑрушла пӑхнӑ пек курӑнаҫҫӗ. Эпӗ ун ҫине шикленсе пӑхатӑп. Хам ҫа-

пах та Иванов парти патнелле утатăп. Парта патне çитсен, малтанах хатĕрлесе хунă çурта тĕпне çутса яратăп, Иванов парти ăшĕнчи япаласене тустарма тытăнтăм. Черновой тетрадьсене, кĕнекесене уçа-уçа пăхатăп, анчах хама интереслентерекен сăвă çук та çук. Юлашкинчен алла альбом лекрĕ. Хай сăвва альбом çине çырнă пуль-ха тесе, эпĕ ăна персе чикрĕм. Çурта ман сўнме патнех çитнĕ, çунса пĕтнĕ ĕнтĕ. Эпĕ класран, пĕр сас-чĕвсĕр тенĕ пек, тухрăм та, пусма тăрăх ерипен анкаласа, хамăр корпуса тухса шурăм. Хамăр выртса тăракан пўлĕм стени çумĕнче лампа çакăнса тăрать. Лампа çуттинче хайхи альбома пăхма тытăнтăм. Альбомĕ яка, хулăн хутран тунăскер, пичĕ çине кистьсем чикнĕ палитра ўкерсе хунă. Малтанхи страницăра Пушкинăн ача чухнехи сăн-ўкерчĕкĕ курăнса кайрĕ. Вăл, кăтра пуçлăскер, пысăк та ăслă куçĕсемпе саллуллăн пăхса ларать. Ытти страницăсем çинче Лермонтов, Гончаров, Кольцов, Некрасов, Никитин, Гоголь сăнĕсем, Тургенев вилĕм вырăнĕ çинче выртнине кăтартакан ўкерчĕк те пур унта. Ку ўкерчĕке туса пĕтереймен иккен. Страницăсене уçнăçемĕн тĕрлĕрен паллă çынсен сăнĕсем курăна пуçларĕç: Коперник, Суворов, Владимир Мономах, Петр I, Венера Милосская тата Леонардо да-Винчи сăнĕсем. Юлашки страницăсенче лăпсăркка йăмра айĕнче шыва кĕрекен ачасене, чăхсене апат парса тăракан хĕрачана, сăпка çине хурлăхлăн пăхса тăракан чăваш хĕрарăмне кăтартакан ўкерчĕксем пурччĕ. Ўкерчĕксем çав тери аван.

Приготовительнăй класра икĕ çул вĕреннĕ хыççăн-ха вăл, ун чухне эпир хĕрачасен шкулне куçнăччĕ, пирĕн шкула Н. Ф. Некрасов художник пычĕ. Рисованипе вĕрентетчĕ вăл. Çав Некрасов пĕрремĕш класра вĕренекен Иванова тек-текех мухтатчĕ.

— Вы знаете, девочки,—тетчĕ вăл пире,—в первом классе есть мальчик Иванов. Он рисует изумительно хорошо. Его приемы в технике рисования особенные, ему одному присущие. Я думаю, что из Иванова выйдет видный художник.

Вăл Иванов ўкерчĕкĕсене пирĕн класа илсе пырса кăтартатчĕ.

Иванов япалана пăхса та, хăй шухăшласа та, пит хăвăрт ўкернĕ. Эпир вара унăн ўкерчĕкĕсем калама çук аван тухнинчен питех те тĕлĕнеттĕмĕр. Пĕрре,

приготовительнӑй класра иккӗмӗш ҫул вӗреннӗ чух·ха вӑл, К. хушаматлӑ ача Г. хушаматлӑ ача тетрадӗнчен ҫырса илме тытӑннӑ, терӗҫ. Пӗр ирхине класа пырсан, доска ҫинче ӳкерчӗк пуррине асӑрхарӑмӑр.

К. ҫинҫе мӑйне тӑснӑ та, парта урлӑ кармашса Г. тетрачӗ ҫине пӑхать. Куҫӗсем ракӑнни пек хӑйӗн, тутисене ҫулакаласа илет пулас. Ӳкерчӗк питех те кулӑшла тухнӑччӗ. Класри ачасем ахӑлтатса кӑна лараҫҫӗ. Учитель пырас умӗн, пӗр-ик минут малараx, Иванов хӑй пычӗ те ӳкерчӗке хуратрӗ. Вӑл тунӑ ӳкерчӗк пулнӑ иккен вӑл. Хӑй ыранне кайса ларнӑ чух К. хушаматлӑ ача Иванова аякран хӑнт! кӑна чышса илчӗ вара.

Каллех альбом ҫинчен. Альбома эпӗ хӗрачасем чиркӳрен таврӑнниччен пӑхса лартӑм. Нимӗн те мар, сӑвӑ тупӑнманни ҫеҫ пӑшӑрхантарчӗ мана.

„Тунтикун ачасем пыриччен класа кӗретӗп те, Иванов альбомне хӑй ыранне чиксе хуратӑп",—тесе шутларӑм эпӗ хам ӑшӑмра. Ҫав вӑхӑтра чиркӳрен таврӑннӑ хӗрачасен сассисем илтӗне пуҫларӗҫ. Эпӗ йӑпӑрт-япӑрт салтӑнса, ҫывранҫи пулса выртрӑм. Альбома минтер айне пытартӑм.

Тепӗр ирхине эпӗ минтер айӗнче выртакан альбома темиҫе хут хыпашласа пӑхрӑм, чунлӑ япалана ачашланӑ пек ачашласа илтӗм эпӗ ӑна. Ҫав ирхине пирӗн, яланхи пекех, чиркӗве каймалла пулчӗ. Чиркӳрен таврӑнсан, эпӗ каллех альбома хыпашласа пӑхрӑм, анчах альбом алла лекмерӗ. Хамӑр ҫук чухне пирӗн пӳлӗмре такам ухтарса ҫӳренине пӗрре кӑна мар асӑрханӑччӗ эпир; хӑш чухне минтер айӗнчи ҫырусем, иккӗленмеллерех кӗнекесем ҫухалатчӗҫ. Иванов альбомӗ ҫинче уҫӑ кӑкӑрлӑ Венера Милосская пурччӗ, ухтарса ҫӳрекене ҫав хӑрушла пек туйӑннӑ пулӗ, терӗм вара, ним тума аптранипе. Вӑл альбома урӑх курасси пулмарӗ вара, таҫти шӑтӑка кайса чикрӗҫ.

К. В. Иванов хӑйӗн пултарулӑхӗпе нумай преподавательсен кӑмӑлне ҫаварнӑ. Эпӗ кунта Некрасов художнике асӑннӑччӗ. Некрасов мастерскойӗ пирӗн класс айӗнче, библиотека пӳлӗмӗнчеччӗ. Эпир, класа ҫӳренӗ чух, ялан ун мастерскойӗ умӗпе иртсе ҫӳреттӗмӗр. Хӑш чух алӑкне уҫса пӑхаттӑмӑр, хӑш чух хӑй патне те кӗреттӗмӗр. Мольбертсемпе кӗнеке шкапӗсем ларакан тулли пӳлӗмре тӗрлӗ тӗлте чӑваш тӗррисем ҫакӑнса тӑратчӗҫ. Некрасов художник ҫав тӗрӗсене питӗ юрататчӗ.

— Девочки, посмотрите, какое богатое сочетание красок, какие линии! Они математически точны. В них поразительная симметрия и гармония. Вышивки эти тоже, как песня, как сказка — народное творчество. Талантливые женщины были среди ваших прабабушек. Эти вышивки — их творческая работа, это — высокое искусство! — тетчӗ вӑл.

Некрасов художник чӑваш тӗррисене, тумӗсене пухнӑ, ӳкернӗ вӗсене, пире те нумай ӳкерттернӗ.

Некрасов мастерскойӗнче эпӗ К. В. Иванова пӗрре кӑна мар курнӑ. Некрасов чӑваш халӑхӗн тӗррисене пысӑк хака хуни, Иванов Некрасовпа туслӑ пурӑнни, паллах, К. В. Ивановшӑн усӑллӑ пулнӑ, ку ҫыхӑну К. В. Иванов талантне, чӗрине халӑх творчестви еннелле туртӑнтарнӑ.

* * *

Пирӗн шкул йӗри-тавра монастырь хӳми евӗр ҫӳлӗ хӳме хӳсе ҫаврӑннӑччӗ. Ҫӳлӗ хӳмепе ҫирӗп режим шкулта вӗренекенсене хулари пурнӑҫпа явӑҫасран сыхласа тӑнӑ. Пирӗн хулана ыйтмасӑр тухса ҫӳреме юраман. Библиотекӑсемпе магазинсене, театра-мӗне пире ярсах каймастчӗҫ ун чухне.

Анчах 1905—1907-мӗш ҫулсенче Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗнче вӗренекенсене нимӗн те тытса чараймарӗ. Шкулти ҫирӗп режим та, ҫӳлӗ хӳме те усӑсӑр пулчӗҫ. Вӗренекенсем хушшинче революциллӗ шухӑшсем сарӑлнӑҫем сарӑла пуҫларӗҫ. Астӑватӑп, аслӑрах класра вӗренекен хӗрачасем ҫӗрле тӑра-тӑра тухатчӗҫ те, никама систермесӗр, вӑрттӑн хӳме урлӑ каҫса хулана ҫӳретчӗҫ; хуларан тӗрлӗ кӗнекесем, брошюрӑсем, листовкӑсем илсе килетчӗҫ, пире, вулама тесе, салата-салата паратчӗҫ. Эпир ку вулама чарнӑ литературӑна ӑҫта май килчӗ унта тенӗ пек, вӑрттӑн вулаттӑмӑр. Хулана тухса ҫӳрекен хӗрачасем пире рабочисемпе студентсен пухӑвӗсем ҫинчен, забастовкӑсем тӑвасси ҫинчен шӑппӑн кала-кала паратчӗҫ. Пирӗн шкултан инҫех мар, Сӗве леш енче крахмал завочӗ пурччӗ. Понизовкин хуҫа завочӗ тетчӗҫ ӑна. Хӗлле, Сӗве пӑрӗ ҫине уҫӑлма тухсан, эпир ҫав завод патӗнчен иртсе ҫӳреттӗмӗр. Пӗрре ҫак заводра взрыв пуласси ҫинчен каласрӗҫ. Чӑн та пӗр каҫхине эпир Понизовкин завочӗ ҫун-

нине куртăмăр. Çав вăхăталла аслă класра вĕренекен арçын ачасем шкул инспекторне Иван Яковлевича петици панă тенине илтрĕмĕр. Рабочисемпе студентсен пухăвĕсене çӳрекен хĕрачасенчен паллăраххисем Анастасия Федорова (халĕ вăл вилнĕ), Марина Андреева тата Мария Иванова пулнă (ку иккĕшĕ пирки эпĕ халĕ нимĕн те пĕлместĕп). Çав хĕрачасем пире революциллĕ событисемпе паллаштарчĕç. Пĕрре, çĕрле, А. Федорова пире январĕн 9-мĕшĕ çинчен каласа пачĕ. Унăн калавĕ пире питĕ хумхантарса ячĕ. Пирĕн хушăри хĕрачасенчен чылайĕшĕ студентсемпе рабочисен пухăвĕсене çӳрес кăмăл пуррине уççăнах каласа пачĕç. Анчах А. Федорова пире:

— Эсир çитĕнсе çитеймен-ха, сирĕн пеккисене кĕртмеççĕ унта, терĕ. Ун сăмахĕсем пирĕн вут-хĕмленнĕ кăмăлсене кăштах сивĕтрĕç.

Çак виçĕ хĕрача пĕрре хамăр корпусрах пурăнакан учительницăна хирĕç выступлени организацилерĕç. Çав учительницăн хăй пӳлĕмне пирĕн спальня витĕр çӳремеллеччĕ. Пĕр каçхине вăл час таврăнмарĕ. Вунпĕр сехет те иртрĕ, анчах учительница çаплах çук. Эпир çывăрма выртнă ĕнтĕ, анчах пĕри те куç хупмастпăрха. Спальнăра темскер пăшăлтатни илтĕнет, темĕн, халиччен пулман япала пулассăн туйăнать. Юлашкинчен хайхи учительница таврăнчĕ. Акă вăл пирĕн пӳлĕме кĕрет, çак самантра такăшĕ лампăна лап сӳнтерсе лартрĕ. Учительница çине унтан та кунтан патаксем, чул таткисемпе кровать ури шашкисем вăркăна пуçларĕç.

— Хĕрачасем! Мĕн тăватăр эсир? — хăрушла сасăпа кăшкăрса ячĕ хайхи учительница.

— Тухса кайăр кунтан!

— Эсир—шпион, доносчица!

— Сире хирĕçлесе забастовка тăватпăр!—илтĕнчĕç Федорова, Иванова тата Андреева сассисем. Çак хушăра учительница хăй пӳлĕмне кĕрсе çухалчĕ. Çав каç вара эпир, хумханнăран пулас, çĕр каçах çывăраймарăмăр.

Тепĕр кĕркунне çитрĕ. Вĕренӳ çулĕ пуçланчĕ. Пирĕн хушăра А. Федорова та, М. Ивановăпа М. Андреева та çук ĕнтĕ. Вĕсене шкултан кăларса янă, вĕсемпе пĕрле ытти классенче вĕренекенсене те чылайăшне „тасатнă“ имĕш. Пирĕн класс та, вĕренекенсен забастовкинче хăйне палăртсах кайман пулин те, „тасатăва“

лекнĕ иккен—46 хĕрачаран 23 хĕрача кăна тăрса юлнă.

Астăватăп, 1907 çулта, февраль уйăхĕнчеççĕ пулас, пĕрремĕш класра вĕренекен ачасем, урокĕсене пĕтерне пулин те çывăрма каймарĕç, темшĕн шавлаççĕ, класрах лараççĕ. Ĕнтĕ вăхăт та чылай пулчĕ. Эпир выртнă, анчах класри темĕнле шава пула, пĕри те çывăрман-ха. Сасартăк класра „Варшавянка" юрлани илтĕнсе кайрĕ. Эпĕ тăрса картишнелле пăхрăм. Пĕрремĕш класс чӳречинчен тухакан лампа çути картишĕнчи таптаннă юра çутатать. Класра çав-çавах шавлани, юрлани, алăкĕсене хӳлтлеттерсе хупни илтĕнет. Кайран пĕлтĕмĕр вара, пĕрремĕш класра вĕренекенсем шкул инспекторне И. Я. Яковлева петици панă иккен. Вĕсем вĕренекен ачасен пурнăçне çăмăллатма, вĕренӳ программине аслăлатма, хăшпĕр преподавательсене: Кочурова, Никифоров пупа тата ыттисене те улăштарма ыйтнă. Дирекци, паллах, ачасем ыйтнипе килĕшмен. Пĕрремĕш класри ачасем çĕрĕпех шавлаççĕ вара. Ирхине ман коридорта тата çăвăнмалли пӳлĕмре дежурствăра тăма лекрĕ. Çавăнпа ман пĕрремĕш класс ачисем мĕн-мĕн тунине курма май килмерĕ. Хĕрачасем каласа панă тăрăх, ирхине ирех пирĕн корпус çинче хĕрлĕ ялав вĕлкĕшсе тăнă мĕн. Ирхи апат умĕн, пĕрремĕш класра вĕренекен ачасенчен пĕри хĕрлĕ ялава антарнă та, забастовка тăвакан ачасем вăл ялава тирпейлĕн пайласа, кашни ачанах кăкăр умне тирмелли лентăсем туса панă. Вара, ирхи апата стройпа аннă чух, кашни ача кăкри çинчех пĕчĕкçеç хĕрлĕ ялав вĕлкĕшнĕ. Çак забастовка тăвакан ачасем хушшинче К. В. Иванов та пулнă. Вăл, Кочуровпа Никифоров пупăн сăнĕсене доска çине тăрăхласа-йĕрĕнсе ӳкернĕскер, забастовкăна активлăн хутшăннине çирĕплетсех калама пулать.

Хĕлле вара, вĕренӳ çулĕ варринче, пĕрремĕш класра вĕренекенсене, забастовка тунăшăн, класĕпех шкултан кăларса ячĕç. Çапла вара, К. В. Ивановпа унăн юлташĕсемшĕн шкул алăкĕ ĕмĕрлĕхех хупăнчĕ.

Пĕрремĕш класс ачисем шкултан саланса пĕтсен, шкул шăпланса юлчĕ. Пушанса юлнă класс хăйĕн пысăк чӳречисемпе хурлăхлăн пăхатчĕ. Пире татах та хытăрах тыткалама пуçларĕç. Кашни утăмрах замечани тăвасса кĕтсе çӳреттĕмĕр, ялан хăранăран ĕнтĕ, пурнăç тĕксĕмленнĕ пек туйăна пуçларĕ.

Пĕррехинче, çав çулах, çуллахи каникултан таврăнсан, эпĕ сулхăн шкул пахчинче, лапсăркка хурама айĕнче, урок хатĕрлесе ларатăп. Пăхатăп—аялти аллейăпа К. В. Иванов утса пырать. Вăл манпа тĕлме тĕл пулчĕ, иртсе каясшăнччĕ пулас, анчах эпĕ ун çине тĕлĕнсе, çав хушăрах савăнса пăхатăп, вăл çакна асăрхарĕ те чарăнса тăчĕ.

— Мĕнле? Кунта килтĕр-и? Вĕренетĕр-и? — кăшт именерех сăмах хушрăм эпĕ.

— Килтĕм... Ăçта каяс тетĕн? Кĕнекесем куçарма шутлатăп тата хатĕрленес тетĕп.

— Мĕнле кĕнекесем куçарас тетĕр?

— Мĕнлисем пулаççĕ,—терĕ те Иванов, малалла утрĕ.

Иванов çитĕнсе кайнă. Илемлĕ вăл, калаçасса та хулăмрах сасăпа калаçать.

1907—1908-мĕш çулсенче Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ чăвашла кĕнекесем пичетлесе кăларкаларĕ: Л. Н. Толстойăн виççĕмĕш классенче вуламалли кĕнекесем тухнăччĕ. Баранов кĕнеки, букварь тата ытти те пурччĕ. Кусемсĕр пуçне славян чĕлхинчен чăвашла куçарнă чиркÿ кĕнекисем те тухнăччĕ. Çав кĕнекесене куçарас, редакцилес тĕлĕшпе Иванов калама çук нумай ĕçленĕ, пĕтĕм ĕçе ун çине тиенĕ темелле.

Шкул инспекторĕ И. Я. Яковлев пирĕн класра логика вĕрентетчĕ. Урока пырсан, вăл час-часах кĕнеке куçарас ĕç çинчен сăмах хускататчĕ. Хăшне мухтатчĕ вăл, хăшне ятлатчĕ. К. В. Иванов Лермонтов çырнă „Калашник хуçа çинчен хунă юрра“ тата „Парус“, „Хыр“ ятлă сăвăсене куçарнăччĕ, вăл куçарнă произведенисем хушшинче Аксаковăн „Хĕрлĕ чечек“, Андерсенăн „Акăшсем“ те пурччĕ. Ун чухне К. В. Иванов „Нарспи“ поэмăна çырса пĕтерсе набора панăччĕ.

Пĕрре И. Я. пирĕн класа „Нарспи“ поэмăн корректурине илсе пынă.

— Вот, хĕрачасем, эдак-и так, Иванов пирĕн талантлă ача: аван куçарать, тата хăй аван произведени çырнă. Ме-ха, вула!—терĕ те пĕр хĕрачана, кĕсйинчен лучăрканса пĕтнĕ хут листисене кăларса пачĕ. Хĕрача вулама тытăнчĕ.

Çав кун пирĕн класра „Нарспи“ поэмăн хитре сăввисем пуçласа шăранчĕç. Эпир мĕн тери тĕлĕннине, мĕн тери савăннине сăмахпа каласа пама хăват та çитес çук.

— Хе, эдак-и так, çав тери аван çырать вĕт, а? — тет старик, пирĕн улшăннă пит-куççене сăнаса.

— Çапла, çапла, — хуллен пăшăлтататпăр эпир.

Урокран тухмалли шăнкăрав шăнкăртатсан, Яковлев аттисене чăкăртаттарса хăй хваттерне кĕрсе кайрĕ. Вăл кайнă хыççăнах пирĕн алăсем „Нарспи" поэмăн корректури патне туртăнчĕç. Çав каç эпир „Нарспи" поэмăна темиçе хут та вуласа тухрăмăр. Çав каçран К. В. Иванов пирĕншĕн чăнласах талантлă та паха тăван поэт пулса тăчĕ.

1908 çулта пире кашнинех „Сказки и предания чуваш" текен сборнике пачĕç. Çак сборникре хайхи „Нарспи" поэма та пичетленнĕ. Сборник мана çав тери кăмăла кайрĕ, анчах поэмăн авторне палăртманшăн эпĕ питех те кăмăлсăрлантăм.

Пĕр ирхине К. В. Иванов хул айне хут хĕстернĕ те И. Я. Яковлев хваттерĕ еннелле пырать. Эпĕ хĕрачасемпе столовăйран тухатăп.

— Иванов, — чĕнсе илтĕм эпĕ ăна — „Сказки и предания чуваш" текен сборникре сирĕн хăвăр çырнă

Скульптор Кудрявцев К. В. Иванов бюстне тăвать.

япаласем вӗт, оригиналлӑ произведенисем, мӗншӗн кӗнеке ятне ҫапла панӑ, мӗншӗн авторне палӑртман?

Иванов тӑнлаври ҫӑра та хура ҫӳҫне якаткаласа илчӗ те, ман ҫине хӑвӑрт пӑхса:

— Пӗлместӗп... Ӑна аслисем авантарах пӗлмелле,— терӗ.

Иванов кӑмӑлсӑр пулнине эпӗ сассинченех туйса илтӗм.

Вӑл хӑрушла вӑхӑтра—хура реакци вӑхӑтӗнче—вак халӑхсем, вӗсемпе пӗрле чӑвашсем те, калама ҫук йывӑр пусмӑрта, сӗм тӗттӗмре пурӑннӑ. Вӗсен культурине ӳстересси ҫинчен шухӑшлама та май пулман. Вак халӑхсен чӗлхипе ҫырнӑ художествӑллӑ произведенисене пичетлемен. Патша чиновникӗсем вак халӑхсен поэчӗсенчен, писателӗсенчен кулнӑ, мӑшкӑлланӑ, вӗсене талантсӑр тесе, ним чухлӗ те сума суман. К. В. Иванов чӑн та талантлӑ поэт пулнӑ, унӑн ҫырас, ӗҫлес кӑмӑлӗ иксӗле пӗлми ҫӑлкуҫӗ пек тапса тӑнӑ, вӑл хӑйӗн тӑван халӑхне чӗререн юратнӑ, уншӑн ҫунса ӗҫленӗ, пусмӑрлӑ-асаплӑ вӑхӑтра хӑйӗн ӗмӗр манми поэмине ҫырса хӑварма пултарнӑ.

К. В. Иванов пирӗн телейлӗ кунсене ҫитеймерӗ, Октябрьти революци пур халӑхсене те тӑванлатса аслӑ культура ҫулӗ ҫине тӑратнине, чӑваш халӑхӗ хушшинчен те ҫӗнӗрен-ҫӗнӗ поэтсем, писательсем, композиторсем, художниксем тухнине кураймарӗ. Паянччен пурӑннӑ пулсан, вӑл паллах, мӗн чухлӗ лайӑх япаласем ҫырнӑ пулӗччӗ.

Юлашки хут эпӗ К. В. Иванова хам Чӗмпӗр шкулӗнчен вӗренсе тухсан, 1909 ҫулта, ҫуркунне, тӗл пултӑм. Вӗренсе тухса киле каяс умӗн эпир хамӑрӑн юратнӑ вырӑнта, „асран кайми кӗпер“ ҫинче ларса ҫӗр каҫрӑмӑр. Ҫав каҫ эпир нумай юрларӑмӑр, калаҫрӑмӑр. Пӗрле вӗреннӗ юлташсенчен яланлӑхах уйрӑлмалла пулнӑран ӗнтӗ пирӗн чӗресем кӑшт ыратнӑ та, хурланнӑ та. Ҫав каҫхине пирӗн кӗпер ҫине К. В. Иванов та пынӑччӗ.

Тул ҫутӑлса килет, ирхи шуҫӑм ҫути тополь тӑррисене эрешлесе илемлетет, ҫав вӑхӑтра эпир хамӑрӑн ҫӑмӑл ҫыхӑсене илтӗмӗр те шкултан тухса кайрӑмӑр (ытти япаласене пристӑне лашапа каҫхинех ӑсатнӑччӗ).

К. В. Иванов пирӗнпе хӑюсӑррӑн сывпуллашрӗ.

— Эпĕ сирĕн пата хам сăвăсене ярса парсан, эсир вĕсене юсаса парăр-ши? — ыйтрăм эпĕ Ивановран. Çав самантра эпĕ хам та хăюсăрлантăм.

— Ярăр, ярăр, пит хавас пулатăп, — терĕ Иванов йăвашрах сасăпа.

Çавăнтан кайран эпĕ Иванова урăх тĕл пулаймарăм, ун патне ярас текен сăвăсене те, тĕрлĕ сăлтавсене пула, çунтарса ятăм.

1915 çул, çуркунне, эпĕ хам туссем урлă К. В. Иванов вилни çинчен пĕлтĕм. Пирĕн юратнă тăван поэт вăхăтсăрах çухалчĕ, анчах К. В. Ивановăн ырă та аслă ячĕ чăваш халăхĕ хушшинче нихăçан та сӳнес çук.

1940.

Г. А. МОЛОСТОВКИН

АСРАН КАЙМИ УЧИТЕЛЬ

1913 çулхи кĕркунне. Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ вĕлле хурчĕ пек сĕрлет. Кунта тĕрлĕ çĕрти чăваш ачисем экзамена пухăннă. Инçетри Çĕпĕртен, Пушкăртран, Хусан, Самар, Саратов тата ытти кĕпĕрнесенчен те килнĕ. Вĕсем хушшинче эпĕ унччен илтмен тĕлĕнмелле ятлисем: Мултиер, Пикпав, Петрикке, Мубаракша тата ыт. те пур. Вĕсем тĕне кĕмен чăваш тата тутар ачисем иккен.

Экзаменсем пĕтрĕç. Пире приготовительнăй шкулăн пĕрремĕш класне 60 ача илчĕç. Питех те пысăк савăнăç,—эпир малалла вĕренсе учитель пулатпăр!

Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕренме пуçласан виççĕмĕш кунĕнче, ирхине, пирĕн класа Иван Степанович ятлă учительпе пĕрле вăтам пӳллĕ, типшĕмрех кăна, илемлĕ пит-куçлă çамрăк çын пырса кĕчĕ. Вăл шапшурă кĕпе, хура костюм тăхăннă.

— Ачасем, ку сире рисовани вĕрентекен учитель— Константин Васильевич пулать, халĕ сире вăл вĕрентет,—терĕ те Иван Степанович тухса кайрĕ.

Константин Васильевича пирĕн ачасем часах юратрĕç. Вăл кашни ачанăн тетрадьне илсе, ун çумне ларса, ӳкерчĕксене мĕнле тумаллине хăй кăтартса паратчĕ. Акă вăл паянхи пекех куçăм умĕнче... Манпа юнашар парта хушшинче ларать, хăйĕн шĕвĕр вĕçлĕ кăранташне хăвăрт шутаркаласа, эпĕ тунă чечек çеçки ӳкерчĕкне юсать.

Пит ашкăнма юратакан ачана та Константин Васильевич вăрçман, çапман, çемçен, ăшшăн калаçса ӳкĕтлетчĕ.

Константин Васильевич вĕрентнĕ вăхăтра пирĕн класа хутран-ситрен шкул инспекторĕ И. Я. Яковлев та пырса пăхатчĕ.

— Ну, Константин Васильевич,—тетчĕ вăл класа

кӗрсенех,—ачасем мӗнле вӗренеҫҫӗ, итлеҫҫӗ-и? Кӳр-ха тетрадьна пӑхам,—пӳрнипе тӑсса кӑтартатчӗ вӑл, парта хушшинче ларакан ачасенчен пӗрин ҫине.

— Аван вӗренеҫҫӗ ачасем, Иван Яковлевич, итлеҫҫӗ, интересленеҫҫӗ, тӑрӑшаҫҫӗ,—тетчӗ Константин Васильевич, пире мухтаса.

Пӗр икӗ эрнерен пире кашни ачана „Сказки и предания чуваш" ятлӑ кӗнеке валеҫсе пачӗҫ. Эпӗ унччен „Нарспи", „Тимӗр тылӑ" тата ыт. вуламан. Ҫав произведенисене эпир часах пӗчченшерӗн кӑна мар, ушкӑнпа пухӑнса темиҫешер хут вулаттӑмӑр.

— Чӑнах пулнӑ-ши вӑл Нарспи?

— Чӑнах пулмасӑр, пирӗн ялта та ун пек ӗҫ пулни ҫинчен халӗ те калаҫаҫҫӗ,—тетчӗҫ вара ачасем „Нарспи" вуласа пӗтерсен пӗр-пӗрин ҫине салхуллӑн пӑхса.

Халӑхӑн чӗри тӗпнех кӗрсе выртакан ҫав вилӗмсӗр поэмӑна ҫыраканӗ—лӑпкӑ та йӑваш, нихҫан вӗҫкӗнленмен, ытти учительсем хушшинче хӑйне нихӑш енчен те пысӑка хуман поэт, чӑваш халӑхӗн чапӗпе мухтавӗ, пирӗн чунтан юратакан, хӑй те пире юратнӑ учитель—К. В. Иванов пулнине нумайӑшӗ пӗлмен те.

Пӗррехинче эпӗ пушӑ вӑхӑтра шкулта сторож пулса ӗҫлекен хамӑр ял ҫыннине—Егора „Нарспи" поэмӑна вуласа патӑм.

— Кам ҫырнӑ-ши ҫак питех те лайӑх япалана?—тесе ыйтатӑп эпӗ Егортан.

— Ара, сирӗн учителӗр. Константин Васильевич ҫырнӑ, теҫҫӗ.

Манӑн кӑмӑлӑм хуҫӑлчӗ, хамран хам вӑтантӑм—епле-ха эпӗ халиччен те ҫавна пӗлмен!

Класра дежурнӑй пулнӑ чухне Константин Васильевич патне час-часах кайма тӗл килетчӗ. Пӗрре эпир юлташпа ун патне класс валли кӑранташсемпе хутсем илме кайрӑмӑр.

Пысӑк мар пӳлӗм. Константин Васильевич сӗтел хушшинче пӗшкӗнсе ларать. Аллинче ҫап-ҫутӑ пӗчӗк ҫӗҫӗ. Вӑл хулӑн картон евӗрлӗ япала татӑкӗ ҫинче темскер каскаласа тӑрать. Сӗтелӗн пӗр кӗтессинче ҫавӑн пек татӑксем темӗн чухлех купаланса выртаҫҫӗ. Вӑл эпир кӗнине сисмен те пулас. Пӗр хускалмасӑр, тӑрӑшса каскалать.

Сӗтел ҫумнех пырса тӑтӑмӑр. Константин Васильевич пуҫне ҫӗклесе пирӗн енне пӑхрӗ.

— Килĕр, килĕр, ачасем, мĕн ĕçпе-ха эсир?

— Хут тата кăранташсем илме килтĕмĕр,—тетпĕр эпир.

Вăл пире тетрадьсемпе кăранташсем пачĕ. Эпир сĕтел патĕнчен çаплах каймастпăр. Константин Васильевич мĕн каскаланине пĕлес килет.

Эпир чăтаймарăмăр:

— Мĕн тăватăр эсир, Константин Васильевич?—тесе ыйтатпăр.

— Ку, ачасем, букварь валли ӳкерчĕксем. Акă курăр: ку упа, тилĕ, кашкăр, акă ку ача лашалла вылять... Эсир букварь вĕреннĕ вĕт, унти ӳкерчĕксем çаксем пулаççĕ те ĕнтĕ. Вĕсене ак çапла, хут çине пичетлеççĕ...

Вăл таса хут илчĕ те, пĕр ӳкерчĕкне пичетлесе кăтартрĕ. Çав ӳкерчĕк çине эпир нумайччен тĕлĕнсе пăхса тăтăмăр...

Эпĕ паянхи пекех унăн пĕчĕкçĕ те тирпейлĕ пӳлĕмне астăватăп. Ытлашши нимĕнех те çук: пĕр сĕтел, ик-виçĕ пукан, кĕнекесем хумалли шкап, кĕтесре тимĕр кровать. Стенасем çинче хăй юратнă поэтсемпе писательсен: Пушкин, Лермонтов, Кольцов, Некрасов, Гоголь, Тургенев, Лев Толстой, Гончаров тата ыттисен портречĕсем çакăнса тăраççĕ. Вĕсене пурне те кĕленчеллĕ рамка ăшне кĕртсе лартнă. Ӳкерчĕкĕсене пурне те ахаль хура кăранташпа, калама çук тирпейлĕ, юратса тунă. Каярахпа эпир çакна пĕлтĕмĕр: çав портретсене Константин Васильевич уроксенчен пушаннă вăхăтра хăй ӳкернĕ, рамкисене те шкулăн столярнăй мастерскойĕнче хăй аллипе тунă, хăех сăрланă. Çав портретсем (вĕсем вуннă ытлаччĕ) Константин Васильевич вилнĕ хыççăн, пĕр пысăк класра çакăнса тăратчĕç. Стенасем çинче çавăн пекех тата фотоӳкерчĕксем нумай. Вĕсене те вăл хăйĕн фотоаппарачĕпе ӳкернĕ. Хăшпĕр чухне Константин Васильевич фотоаппаратне шкул пахчине илсе тухатчĕ те, вĕренекен ачасемпе хĕрачасене ӳкеретчĕ.

Эпĕ тата Константин Васильевичăн пысăк картинисенчен пĕрне астăватăп. Вăл хăйĕн „Нарспи" поэмин инсценировки валли декораци тунăччĕ. Пысăк тăваткал пир тăрăхĕ çине çуллă сăрăпа „Силпи ялне" тата „Сĕм вăрмана" ӳкернĕччĕ. Çавăн пекех тата вăл „Иван Сусанин" опера инсценировки валли те деко-

раци тунӑ пулнӑ. Анчах питех те кӳренмелле ӗнтӗ, Константин Васильевичӑн ҫав картинисенчен пӗри те упранса юлман.

Тепӗр, 1914 ҫулти кӗркунне, Константин Васильевич пире нумай вӗрентеймерӗ. Вӑл час-часах чирлекен пулчӗ, унӑн ӳслӗкӗ вӑйланнӑ. Вара часах эпир ӑна хӑйӗн килне, ӗлӗкхи Ӗпхӳ кӗпӗрнинчи Слакпуҫ ялне ӑсатса ятӑмӑр.

Каяс умӗн вӑл, чирлӗскер, пирӗн класа кӗрсе, хӑйӗн вӗренекенӗсемпе сывпуллашрӗ. Вӑл пире лӑплантарса: „Эпӗ, ачасем, часах килетӗп, сывалатӑп та таврӑнатӑп“,—терӗ. Анчах та Константин Васильевича каялла, шкула таврӑнма пӳрмен. Ҫуркуннерехпе эпир хурлӑхлӑ хыпар илтрӗмӗр: пирӗн юратнӑ учитель Константин Васильевич вилсе кайнӑ.

Калама ҫук йывӑр хыпар. Тӳсме ҫук пысӑк хуйхӑ ҫавӑрса илчӗ пире. Чӗресем ҫине йывӑр чул йӑванса аннӑ пекех пулчӗ. Ачасем нумайӑшӗ ӗсӗклесе, куҫҫулӗпе йӗреҫҫӗ. Константин Васильевич пиртен ӗмӗрлӗхе уйӑрӑлнӑ...

* * *

Константин Васильевич патӗнче вӗреннӗренпе нумай ҫулсем иртрӗҫ ӗнтӗ. Октябрьти Аслӑ революци тивлечӗпе чӑваш халӑхӗ ӗмӗрхи пусмӑртан, асапран, тӗттӗмлӗхрен хӑтӑлса, ҫутӑ та телейлӗ пурнӑҫ туса хучӗ. Ленин—Сталин партийӗ ертсе пынипе чӑваш халӑхӗн формипе нациллӗ, содержанипе социализмлӑ культури ӳссе чечекленчӗ.

Константин Васильевича хаяр патша саманин пӑчӑхнӑ сывлӑшӗнче пӗтме пӳрнӗ пулсан, унӑн ,,Нарспи“ поэмине пирӗн совет саманинче, Сталин саманинче, чи ҫӳлти пусӑма ҫӗкленме пӳрнӗ. „Нарспи“ поэмӑна халӗ кашни чӑваш рабочийӗ, колхозникӗ, интеллигенчӗ вулать, вӑл кӗнеке кашни шкулта, вулав ҫуртӗнче, библиотекӑра, кашни ҫуртпа кашни хваттерте тенӗ пекех пур.

,,Нарспи“—вӑхӑтсӑр вилнӗ поэтӑн вилӗмсӗр памятникӗ пулса тӑчӗ.

Эпӗ хамӑн учителӗн ,,Нарспи“ поэмине час-часах алла илетӗп. Унӑн: . . .

Чипер ача Сентти пур
Чупса ҫӳрет урамра,
Кĕвентине утланса
Ача вылять лашалла—

тенĕ вырăна вуласан, манăн умма сĕтел хушшинче букварь валли ӳкерчĕксем касса хатĕрлекен Константин Васильевичăн ҫутă сăнĕ ҫĕкленсе тăрать. Унăн куҫĕсем те ача куҫĕ пек, тап-таса та яр-уҫă, тутисем ăшшăн кулаҫҫĕ, ачасемпе ҫепĕҫ калаҫакан сасси хăлхана ачашлать.

Константин Васильевич ачасене питех те юратни вăл хăйĕн кĕске ĕмĕрне учитель пулса ĕҫлесе ирттернинчен кăна мар, ача-пăчасем валли ятарласах сăвăсем ҫырнинчен, хăй аллипе букварь ӳкерчĕкĕсем туниичен, шкулта вуламалли кĕнекесем нумай куҫарса редакцилениичен те лайăх курăнать. Константин Васильевич чаплă поэт, лайăх художник тата живописец, куҫару маҫтăрĕ кăна мар, пултаруллă та чи хастарлă педагог та пулнă.

Мĕн пĕчĕкренпех вĕренекен ачасен коллективĕнче пурăнни, хăйĕн тăван халăхне чунтан-вартан юратни, халăх нушипе хуйхи-суйхине халăхпа пĕрле тӳссе ирттерни—ҫаксем пурте ĕнтĕ К. В. Иванова тискер патша саманинче чăваш халăхне ҫутта кăларассишĕн кĕрешекенсен малти ретне тăратнă.

1940.

ЛУККА ЭРХИПĔ

„НАРСПИ“ ПОЭМĂНА МАЛТАН ВУЛАНИ[1]

Е. М. Матвеев мана çапла каласа пачĕ:

„1908 çул. Май уйăхĕн юлашки кунĕсем. Шкул картишĕнче курăксем симĕсленнĕ, сиреньсем, акацисем чечек кăларнă, тополь турачĕсем çулçăпа йывăрланма пуçланă, улмуççисемпе груша йывăççисем кăна чечеке ларайманччĕ.

Ирхи апат турăмăр. Уроксем пуçланиччен тепĕр сехете яхăн. Кĕнекесем илсе, хăшĕ Сĕве хĕрринелле, хăшĕ топольсемпе хурамасем айĕнчи вăрăм пукансем патнелле кайма васкаса утатпăр. Пахчана кĕме пуçларăмăр çеç, çӳлтен пусма тăрăх Иван Яковлевич аннине курах кайрăмăр. Кулленхи пек мар васкаса утать. Туйине аршăн малалла ывăтса пырать, сулахай аллинче папка. Пирĕн паян малтанхи урок—педагогика—И. Я. Яковлев предмечĕ. Анчах урок пуçланас вăхăт çитесси инçе-ха. Вăл пире курах кайрĕ.

— Класа, пурте класа!—терĕ.

Эпĕ хăраса ӳкрĕм. Унăн урокне ирхине вĕренсе çитеретĕп тесе, каçхине тĕплех вĕренсе пĕтерейменччĕ. Эпир урока тĕплĕн хатĕрленсе пымасăр ирттерсе яни çукчĕ. Пуринчен ытла Иван Яковлевич вĕрентекен предметсене çине тăрса хатĕрленеттĕмĕр.

Класа чупса кайрăмăр. Вăл пирĕн хыççăн:

— Дежурнăй звонок патăр!—хушрĕ пĕрине.

Часах звонок та пулчĕ. Иван Яковлевич та класа çитсе кĕчĕ.

— Пурте-и?—ыйтрĕ вăл.

— Пурте!—терĕ дежурнăй.

Иван Яковлевич, икĕ аллине каялла тытнă та, пĕр икĕ хут алăк патĕнчен чӳрече патне çитиччен каллĕ-

---

[1] Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕреннĕ Е. М. Матвеев каласа кăтартнине астуса çыратăп.—*Л. Э.*

маллĕ утса илчĕ. Унтан кафедра хыçĕнчи пукан çине пырса ларчĕ те:

— Матвеев Ефим!—терĕ.

Эпĕ кафедра патне тухса тăтăм.

Иван Яковлевич папкине салтса, мана питĕ хулăм тетрадь тыттарчĕ.

— Вула!—терĕ вăл.—Ыттисем пурте итлĕр!

— „Нарспи"—тесе вулатăп.—„Силпи ялĕнче".

Пуш уйăхĕн вĕçĕнче
Хĕвел пăхрĕ ăшăтса,
Силпи чăваш ялĕнче
Юр ирĕлчĕ васкаса...

Çаплах малалла вуласа пыратăп.

— Чарăн!—терĕ Иван Яковлевич.

— Мĕнле?—тесе ыйтрĕ дежурнăйран.

— Питĕ лайăх,—терĕ лешĕ.

— Апла пулсан, эсĕ нимĕн те ăнланмастăн,—терĕ. Вара хăех: ,,Вăйлă"—тесе хучĕ.

Малалла вулатпăр. Чарăнма хушать те каллех: мĕнле? тесе ыйтать. Ачасем ăна хирĕç ответ параççĕ. Пирĕн класра ытти учительсен урокĕсем пуçланмалла. Коридорта звонок сасси те илтĕнет, учительсем алăка уçса та пăхаççĕ. Иван Яковлевич вĕсене:

— Каçарăр, урока нимĕнле те ку тĕлте пĕтерме çук, уншăн эсир ыран ман сехетсене йышăнăр,—тесе йăпатса ярать.

Шавлать, кашлать сĕм вăрман,
Вĕçĕ-хĕрри курăнмасть,
Кутсăр-пуççăр çил тухсан,
Чарăнассăн туйăнмасть...

Çапла вуласа пыратăп.

— Чарăн! Мĕнле?—тесе ыйтать.

Ăна эпир паракан ответ каллех килĕшмерĕ.

— Эсĕ чĕресĕр çын пулмĕ вĕт?—тесе хучĕ.

Вуласа пĕтертĕмĕр.

— Мĕн тетĕр?—ыйтрĕ пĕринчен, унтан тепринчен, çапла пуринчен те ыйтса тухрĕ.

Пĕри капла калать, тепри тата лайăхрах калать.

— Темиçе сехет вуларăмăр, лайăх ответ памалăх ăнланаймарăр, сирĕнпе вăхăта ирттерни шел!—тесе хучĕ старик.

— Вулакан ывăнчĕ пулĕ, юлашкинчен унтан ыйтарха, вăл мĕн тейĕ?—терĕ.

— Манăн кăмăл та хуçăлать, çавăнтах хавасланса та савăнатăп, чĕре вырăнтан тапранчĕ, сиксе тухмин юрĕччĕ, Иван Яковлевич,—терĕм эпĕ.

— Эпĕ те ĕнертенпе ларса тăма вырăн тупаймастăп, сирĕн пата васкаса ирех килтĕм!

— Кам çырнă ăна, Иван Яковлевич?

— Константин Васильевич Иванов, хамăр поэт,—терĕ.

Калаçма кĕрсе кайрĕ.

— Ачасем!—терĕ,—йĕр хурса паракансем тупăнчĕç, çав йĕрпе кайса сукмак çине тухакансем пулĕç, сукмакпа малалла утса чăваш та çул çине тухĕ. Шкул ĕçĕ, унăн ĕмĕчĕ—чăваша кĕнеке парасси, кашни чăваш пўртĕнчех, хуринче те, шурринче те, букваре алăра тĕрĕс тытма пĕлекенсем пĕрер çын та пулин вĕрентсе ўстересси. Шкул вăл—эсир. Чăваш чĕлхипе сăвă çырма çук тесе хур тăвакансем нумай-ха. Мĕнле кăна сăвăсем çырма пулать иккенне паян хăвăр куртăр. Вĕренĕр, чăваш хушшине çутă сарăр, сăвăсем те пулĕç,—терĕ.—„Нарспие" кĕнеке туса кăларăпăр.

Урок сехечĕсем пĕтрĕç. Иван Яковлевич пирĕн патран тухса ерипен-ерипен ту çинелле, хваттерне кайрĕ. Эпир тĕлĕнсе юлтăмăр. Çав кунччен хамăр пурнăçа хамăр лайăх пĕлеймен. Çав кун „Нарспи" чăваш кунçулне, пирĕн пурнăçа куç умне, куçкĕски çинчи пек, кăларса тăратрĕ.

Вара çав çулах, кĕркунне çитсен пире „Нарспи" кĕнекене валеçсе пачĕç, юрăсен кĕнеки те тухнăччĕ.

Çав 1908 çулах Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ 40 çул тултарнине уявлама пухăннăччĕ. Уяв пуххинче Чĕмпĕр губернаторĕ, архиерей, Чĕмпĕрти тĕрлĕ шкулсенчен пынă директорсем, преподавательсем, ытти хуласенчен пынă пысăк чинлă çынсем пурччĕ.

Председательте ларнă Чĕмпĕр губернаторĕ:

— Халĕ Иванов воспитанник шкулта вĕренекенсен ячĕпе Иван Яковлевича хисеплесе çырнă чăвашла сăвă вуласа парать,—тесе пĕлтернине илтсен, хамăра хамăр ĕненместпĕр, „çаплах кларĕ-ши?"—тетпĕр.

К. В. Иванов тухрĕ те Иван Яковлевича чăннипех чăвашла сăвăпа саламларĕ.

Вуласа пĕтерчĕ. Эпир çил-тăвăл пек алă çупатпăр. Пирĕн çил-тăвăл чинлă çынсене те ярса илчĕ. Вĕсем те нумайччен алă çупрĕç. Иван Яковлевичăн çутă кусĕсенчен икĕ шултра тумлам татăлса ӳкрĕ.

Халĕ эпĕ çав сăвва астуса илейместĕп[1].

Константин Ивановпа эпир пушшех туслашса кайрăмăр.

Вăл мана 1908 çулти май уйăхĕнче кун çинчен каярахпа çапла ăнлантарса пачĕ:

— Каç пуласпа 7 сехет тĕлнелле Иван Яковлевич патне кайрăм. „Нарспи" çырса пĕтертĕм, Иван Яковлевич. Анчах Нарспипе Сетнер хăйсем те пĕтрĕç, – терĕм.

— Çырса пĕтерни аван. Эпĕ те çаплах шутланăччĕ, Нарспипе Сетнер иккĕшĕ те пĕтеççĕ пулĕ, тенĕччĕ. Пĕтни шел. Анчах ан хуйхăр: вĕсем халăхра нумайччен пурăнĕç,—терĕ.

(Çавăн чухне Иван Яковлевич Константин Васильевича çапла каланă: „Санăн яту та Нарспипе пĕрле чăвашра ĕмĕрлĕхех юлĕ, Константин, эсĕ пысăк поэт",— тенĕ).

— Унтан сĕтел хушшине чей ĕçме лартрĕ. Вулама тытăнтăмăр. Çывăрма вăхăт. Екатерина Алексеевна темиçе хутчен те „çывăрма саланăр",—тесе пырса кайрĕ. Иван Яковлевич кабинет алăкне хупса шалтан питĕрсе илчĕ те, кăшт тăрсан вара тул та çутăлса кайрĕ, эпир çаплах вулатпăр. Акă вуласа пĕтертĕмĕр çеç, Екатерина Алексеевна алăка пырса шаккарĕ.

— Çитет сире, ирхи апата тухăр хуть,—терĕ.

Чей ĕçрĕмĕр те Иван Яковлевич „Нарспие" папка ăшне хурса çыхса çавăнтах сирĕн пата тухса кайрĕ.

Çапла каласа пачĕ мана К. В. Иванов, — тет Е. М. Матвеев.—Малаллине малта каласа патăм. Çапла эпĕ „Нарспине" вăл тетрадь çинче чухнех, халăха (30—40 ученике) чи малтан вуласа параканни пулса тăтăм,—тесе пĕтерчĕ вăл хăйĕн сăмахне.

1948.

[1] К. В. Иванов И. Я. Яковлева хисеплесе çырнă сăвă халь пурте пĕлсе тăракан „Хальхи самана" пулнă.

Я. УХСАЙ

Чăваш халăх поэчĕ

МАЛТАНХИ СПЕКТАКЛЬ[1]

„Нарспи" поэма хăйĕн илемлĕх авторитетне çулран-çул ӳстерсе пынă. Иванов çуралса ӳснĕ Слакпуçĕнчен çичĕ çухрăмри Кайраклă ялĕнче пăртакçă вĕреннĕ çамрăксем революцин малтанхи çулĕсенче „Нарспине" драма евĕр йĕркелесе сцена çинче лартнă. Нарспи çакăнса вилме хăтланнине кăтартнă чух куççуль юхтаракан хĕрарăмсем тӳссе тăрайман, Нарспие вилĕмрен çăлас тесе, кĕпĕрех сцена çине хăпарнă, кăшкăрашма тата ӳкĕтлеме тытăннă.

Çакă траги-комедилле факт халиччен спектакль таврашĕ курман хĕрарăмсен айванлăхне, çав вăхăтрах Ивановăн пысăк поэзиллĕ хăватне, вăл хăйĕн „глаголĕпе", Пушкин каларĕшле, çынсен чĕрисене çунтарма, чĕнме, хавхалатма пултарнине кăтартать.

„Нарспи" çинчен Фет поэт сăмахĕсене калама пулать:

Çакă пĕчĕкçĕ çеç кĕнеке
Чылай томсенчен йывăртарах.

---

[1] Ку сыпăка Я. Ухсайăн „Константин Васильевич Иванов" ятлă кĕнекинчен илнĕ. (Чăвашгосиздат, 1940, 40 стр.)

К. В. ИВАНОВА ХАЛАЛЛАСА ҪЫРНӐ САВӐСЕМ

К. В. ИВАНОВА ХАЛАЛЛАСА ÇЫРНĂ САВĂСЕМ

Н. И. ШЕЛЕПИ
Чăваш халăх поэчĕ

ЧĂВАШ ШĂПЧĂКĔ

(*К. В. Иванова*)

Санăн ятна ырă сунса,
Паян эпĕр
Тараватлăн уяв туса
Хисеплетпĕр.

Чаплă ĕçе сума суса
Асăнатпăр,
Хĕрлĕ ялав айне тăрса
Пахалатпăр.

Юратнă халăх ывăлĕ,
Аслă сăвăçă,
Ирĕклĕхĕн çутă çăлĕ—
Санăн ĕçÿ.

Мул тĕнчиллĕ имсĕр-сĕмсĕр
Саманара
Шăрантарнă эс вилĕмсĕр
Сăвă-юрра.

Паян мĕнпур халăх санпа
Мухтанатпăр,
Сана ăшă сăмахсемпе
Асăнатпăр.

Пĕтĕм чăваш сан ĕçÿпе
Хумханатпăр;
Совет Союз хăнисемпе
Уявлатпăр.

Патша тĕнчи чăвашсене
Сума суман,
Санăн чаплă юррусене
Çут кун паман.

Халĕ санăн юррусем
Ялкăшаççĕ;
Тăван çĕршыв талккишĕпех
Янăраççĕ.

Тăван халăх ывалĕ,
Хастар чĕре,
Юрру санăн ĕмĕр юлĕ
Кĕрекере.

Ĕнтĕ пирĕн юрăсем
Çĕнелчĕçĕ;
Сталинла симфонисем
Çĕнтерчĕçĕ.

Халь Сетнерпе Нарсписем
Савăнаççĕ,
Тулăх, ырă пурнăçпа
Пурăнаççĕ.

Ĕçхалăхне чи телейлĕ
Пурнăç патне
Ертсе пырать çĕнтерӳллĕн
Сталин атте.

1940.

С. В. ЭЛЬГЕР
Чăваш халăх поэчĕ

„НАРСПИ“ АВТОРНЕ

Вăл, çурхи юр айĕнчен
Пĕччен тухнă чечек пек,
Ирхи çутă умĕнчен
Хăпаракан çăлтăр пек,—

Пирĕн чăваш çĕршывне
Çурхи илем кĕриччен,
Ялсем, уй-хирсем çине
Хĕвел çутти ӳкиччен—

Чуралăхри чĕлхене
Шанчăк пама курăннă,
Тухас сăвăç-туссене
Çул кăтартма пуçăннă.

Тăван чĕлхин сухине
Ҫӳлĕннĕ вăл хăйне хăй,
Ĕçĕн пулас уссине
Хыт ĕненсе хунă вăй.

Анчах... ăна хисепсĕр
Сĕмсĕр вилĕм хупларĕ;
Çавах та вăл пире пĕр
Пысăк шанчăк кăтартрĕ.

1925.

ЯКОВ УХСАЙ

Чăваш халăх поэчĕ

ГРАНИТ

Хăй туйипе ача чухне
Çемçе шап-шурă юр çине
Ятне çырсассăн, ăнсăртран
Ăна тăман шăлса кайсан,
Юнтарнă вăл, вара ятне
Картланă симĕс пăр çине.

Шутланă вăл—çурхи çырма
Пурне те уççăн вулама
Инçе юхтарĕ ун ятне
Кăтартĕ сĕм вăрмансене,
Шывран ятне сыпса илсен,
Çӳлте какалĕç акăшсем.

Анчах та Иванов пĕлмен,
Сăн-пичĕ юласса сисмен:
Таса карел гранитĕнчен
Ларать хăй çурчĕ умĕнче—
Ăна катаймĕ ăнсăртран
Нихçан е çумăр е тăман.

1940.

ИВАНОВ ВĂРМАНĚ

Пирĕн атте—ват юман
Халăх юрринчен

Поэт юман пулса шавланă
Асаплă чуллă çĕр çинче,—
Кашни çулçи пĕр юрă пană,
Юман юрланă пĕр пĕччен.

Ăна усал тĕнче тĕп тунă.
Юман кун-çулĕ вăрăм мар...
Йĕкелĕсем нумай-ха унăн,—
Çĕкленĕ, ашкăрĕ вăрман.

Мухтавлă йывăçа кам манĕ?
Пуç тайрĕ халăх кăмăлтан.
Йĕкелсенчен юман вăрманĕ
Хăпарчĕ пĕлĕтсем таран.

Ĕрчевлĕ вăрлăх акаканĕ
Кайсан та, ĕмĕчĕ кайман.
Кашларĕ Иванов вăрманĕ,
Хитре вăрман, сĕм-сĕм вăрман,
Чăваш поэзийĕн вăрманĕ.

1940.

П. ХУЗАНКАИ
Чӑваш халӑх поэчӗ

КОНСТАНТИН ИВАНОВ

Тумламшӑн тинӗс патӑн халӑха.
Пӗр пӗрчӗ илтӗн—тавӑртӑн капан.
Ҫул хыҫҫӑн ҫул... ҫаплах шавлатӑн-ха,
Пур аслӑ ҫӗршыва тӑнлаттаран.
Тӑван йӑху сана, яланлӑха
Савса, ыттисене калать: ак ман
Тинкерлӗ куҫ, улталами хӑлха.
Пуриншӗн те вӑл пултӑр паянтан.
Ылханӑр унпа шай чуралӑха,
Ҫын тивлетне юратӑр унпа тан.

1940.

СТИХВАН ШАВЛЫ

КОНСТАНТИН ИВАНОВĂН ЮЛАШКИ СĂМАХĔ

Халь маншăн сурчăк—сĕмсĕр цензор,
Писсе хускалнă кăмăла тăкам:
Хĕрес хуман атеист пек, пупсемсĕр,
Эп нÿрлĕ шăтăка куçам.
Юлашкинчен хăть ан варлаччăр,
Ан хăлаçланччăр
Шалпар шăналăк—çанă силлетсе,
Шăта пĕлмен куçĕсене те ан çăтăлантарччăр—
„Укçа! Укçа! Укçа!" тесе.
Ман гонорарăм çук, пĕр пус та сыхлаймарăм,
Упраннă ылттăнăм—хутсен тĕрки.
Ана эп халăхшăн тĕрлерĕм,
Укаларăм,
Пупсем валли—хăлха чикки!
Мана Сетнерĕмсем пытарччăр,
Катан пир тăхăнтарччăр Нарсписем;
Тăпрам çинче: „Тăхтамансем пăчланччăр!"
тесе сăмах калаччăр,
Куç йăтаймасăр чĕтĕреччĕр тăшмансем.
Пуç вĕçĕнче хĕрес те тайăлса ан лартăр,
Чĕр чух эп пăталаннă ун çумне,—
Вăштăртатса пилеш тĕмĕ шавлатăр,
Юнне тумлаттăр чул юпа çине.
Чун усрасси тата, тен, пĕр сехет-тĕр;
Çывхар, çунатлă Муза,—
Тăлăх тусăм,
Сывпуллашар,
Жандарм курасран пĕр шикленмесĕр
Юлашки хут хăть уççăн калаçар.
Эс астăватăн-и, Некрасов курнă:
Сан йăмăкна пасар урамĕнче,

Ана саламатпа хӗненӗ
урнӑ
палач пур халӑх умӗнче.
Илтетӗн-и: чӑваш йӑмӑкусем макраҫҫӗ,
Телей шыраҫҫӗ,
Тупаймасан—сывпул тӗнче!—
Тип варсене каяҫ те уртӑнаҫҫӗ
Йӑмра туратӗнчен.
Пырсамччӗ,
Атӑл хӗрне пыр эс:
Виле сулли ишет Аҫтӑрхана:
Кашта—
Пӗр ват чӑваш тата ик вырӑс
Пыраҫҫӗ сулланса.
Ан хуп куҫна!—
Нумай ҫулсем пӑлхавҫӑсем анаҫҫӗ,
Мӗн Разинран вара!
Ҫилсем тулаҫҫӗ,
Шӑхӑраҫҫӗ;
Йӗри-тавра—
хура, хура!..
Сӗм авалтан эс пурӑнан, чӗкеҫӗм,
Тус пулнӑ эс Гомерпала.
Юлашкинчен кала,
Тӑванӑм, чиперккеҫӗм,
Хӑш ҫулпалла ман утмаллаччӗ-ши? Кала!
Шавларӗ Чӗмпӗр.
Шкул пӑлханчӗ.
Ӑҫта-ши пиллӗкмӗш ҫулсем?
Ҫурт тӑрринче хӑмач хумханчӗ...
Ӑҫта-ши халь шкултан кӑларнисем?
Тен, хӑшӗ вӑрҫӑра-тӑр, офицер-тӑр...
Тепри хӑйрать пуль, тен, тӗрме решеткине...
Эп хӑтараймӑп ҫамрӑклӑх тусне.—
Тӗнче кисрентӗр!—
Мана шӑлтарчӗҫ библи тусанне.
Яланлӑха ҫухалчӗ,
Ванчӗ
Шанчӑк.
Миҫе ҫӗр юрӑ сӳнчӗ ӑшӑмра?!
Туберкулез кышларӗ, выҫӑ анчӑк,
Вӑл ҫирӗм тӑваттӑра
Ӳкерчӗ ураран.

Тӳре-шара,
„Чи ырă пиллĕх“ çав пулать сан?
Тавсси, чуралăх самани!
Сана, ура çине тăрас пулсассăн,
Эп тавăрăттăм, кĕрт ами!
Эп тавăрăттăм Пушкиншăн,
Декабристсемшĕн,
Эп тавăрăттăм Лермонтовшăн та,
Эп тавăрăттăм Çĕпĕрелле утнисемшĕн...
Пӳрмен
Шăпам ӳкмен.
Ура вĕçне шантать...
Çитет иккен хура юлташăм.
Сывлăш пӳлĕ...
Çур çул кĕтеп...
Хăрса кĕллениччен
Ма вăрçăра, асаттене пек, вилĕм
Мана кĕтмен-ши Франци çĕрĕнче!
Каларĕ—„вăрçăра“...
Вара
Ман камшăн пуç хурасчĕ?
Сетнершĕн-и
Е императоршăн-и?
Тронне кышлаччăр
Йĕкехӳрепеле шăши!
Ĕнтĕ çулталăк çапăçать патшамăр,
Вăрçа, вăрçа хăвать вăл халăха.
Пуç чашкисен туне купалăр!—
Пин-пин ача юлать ав тăлăха.
Пĕр туртăшать империпе импери.
Усси кама? Сухапуç чăвашне-и?
Тырри ӳсет ун ав, имшерĕн,
Ма ашкăрмасть çава лекмен ĕшненĕн?
Ма пӳлмисем ун пушă, куçĕ пӳрлĕ,
Ма пӳлĕх ун хутне кĕмест?
Ма сăлăп янă алăк урлă
Çич çул çитерне ăйăр кĕçенмест?
Чĕре çунать...
Ула ялавшăн-и
„Урра“ тăсса,
ура хуçса
Вăрçа кĕрем?
Крават çинчех кышлатăр чир шăни,

Çапах та парӑнмасӑр эп вилем!
Хӑлат пек эп çӗклентӗм
Поэзи тӳпине,
Поэзи алтӑрне тӳнтертӗм,
Эп ӗçрӗм унӑн шерпетне.
Мӗскӗннисемшӗн сас çӗклерӗм
Çӑхан пуçӗ çине тӑрса.
Чӗрнисемпе чуна вӑл чӗрмелерӗ,
Вӑл чӗлхене те ыватрӗ касса...
Эп аттере те тӳрлӗх тупаймарӑм,
Вӑл хӳтлемерӗ ылттӑн-кӗмӗлпе:
Хам ӗмӗрте те тинӗс кураймарӑм,
Эп çӳреймерӗм унӑн хӗррипе,
Эп сывлаймарӑм сиплӗ сывлӑш;
Кил сӗрӗмне те çӑтмӑп тек...
Çырмасенче саралчӗ хӑмӑш,
Шыв кукринче хӑрса ӳкрӗ чечек...
Ӗмӗрлӗхе сывпул, çунатлӑ Муза,
Чӑваш ялӗсене вӗçтер эс, тӑлӑх тусӑм,—
Ёпхӳпеле Самар таран,
Чӗмпӗрпеле Хусан таран,
Ват Шупашкар таран
Пӗлтер чӑваш йышне:
Сан ывӑлу куç хупрӗ, те,
Пӗр вӑхӑтсӑр пуçне çухатрӗ, те.

1940.

ТУПМАЛЛИ

Стр.

Чăваш халăхĕн мухтавлă ывăлĕ (*В. Долгов* статьи) 5

Асаилӳсем

Ашшĕ çырнинчен 17
Амăшĕ Евдокия Васильевна каласа пани 20
Аслă йăмăкĕ Мария Васильевна аса илни 23
Пичче çинчен аса илнисем (поэтăн вăтам йăмăкĕ П. В. Иванова çырнă) 29
И. Т. Трофимов. К. В. Иванов Чĕмпĕр шкулĕнче 36
К. А. Апанасов. К. В. Иванов кăмăлĕ 46
С. Н. Алексеев. Пĕр парта хушшинче 47
М. Д. Трубина. Тăван поэта аса илнисем 53
Г. А. Молостовкин. Асран кайми учитель 65
Лукка Эрхипĕ. „Нарспи“ поэмăна малтан вулани 70
Я. Ухсай. Малтанхи спектакль 74

К. В. Иванова халалласа çырнă сăвăсем

Н. И. Шелепи. Чăваш шăпчăкĕ 77
С. В. Эльгер. „Нарспи“ авторне 79
Яков Ухсай. Гранит 80
Иванов вăрманĕ 81
П. Хусанкай. Константин Иванов 82
Стихван Шавлы. Константин Ивановăн юлашки сăмахĕ 83

Редактор *В. Канюков*
Техн. редактор *И. Григорьев*
Обложка и рисунки *П. Сизова*
Корректор *М. Осипова*

НТ 00988. Подписано к печати 1-III-1952 г. Объем 4,62 п. л. Учетно-издательских листов 3,65. Бумага 84x108/32. Тираж 2 000 экз. Заказ № 15.

Типография № 1 Чувашполиграфиздата, г. Чебоксары.

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР

Цена 90 коп.
Номинал по прейскуранту 1952 г.

СЛАВНЫЙ СЫН
ЧУВАШСКОГО НАРОДА
(ВОСПОМИНАНИЕ ОБ ИВАНОВЕ)

на чувашском языке

ЧУВАШГОСИЗДАТ
ЧЕБОКСАРЫ — 1952